Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 НОЙАБӖР 21 ТУНТИКУН 267(5080) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухать. ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ. Пӗр №-рӗ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑс пайӗн—7—97, йалхуҫалах пайӗн — 4—97, советсен пайӗн—0—88, промышлӗннӑс пайӗн—0—85, йалкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн — 6—23.

Пичетри пропагандӑн ӗҫе татса паракан ролӗ

Пӗтӗм Сойузри Коммунистсен (большевиксен) Партин Тӗп Комитечӗ „ПСК(б)П Историн Кӗске курсне" кӑларнӑ май парти пропагандине йӗркелесси ҫинчен йышӑннӑ постановлени пропагандӑ ӗҫӗн организацинче пулнӑ кустарщинӑна пӗтерсе хурать. Тӗп Комитет пропагандӑ ӗҫӗ пирӗн кадрсене идейӑ йенчен хӗҫпӑшаллантарас задачсене пӗтӗмпех тивӗҫлӗ тума кирлисене пурне те турӗ.

Халӗ уйрӑмӑнах пичетри сӑмахӑн—пичетри пропагандӑн ролӗ пысӑкланать. Партин пропагандисла тата теорилӗ ӗҫӗнче сӑмахлӑ пропагандӑпа пичетри пропагандӑ хушшинче пулнӑ уйрӑмлӑха пӗтермесӗр ҫитӗнӳ тӑвасси ҫинчен шухӑшламалли те ҫук.

Пытармали ҫук, сӑмахлӑ пропагандӑ йулашки вӑхӑтсене ҫитиччченех парти вӗрентӗвӗнче пуҫ пулса тӑракан формӑ пулнӑ, пичетри пропагандӑ иккӗмӗш вырӑнта тӑнӑ. Ҫапла пулни вӑл, сӑмахран, парти организацисем хӑйсен пӗтӗм вӑйӗсемпе тимлӗхне кружоксем туса тултарас ӗҫе, урӑхла каласан—сӑмахлӑ пропагандӑна хуҫинче курӑнса тӑнӑ. Политикӑлӑ вӗренӗвӗн ытти формисене, уйрӑмӑнах—марксисӑм-ленинисӑма харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренессине тепле пӑсӑк ӗҫ пекех шутланӑ; пур коммунистсен те, вӗсен хатӗрленӗвӗ кирек мӗнле пулсан та, обйазательнӑ йӗркепе кружоксене ҫӳремеле пулнӑ.

Коммунистсене кружоксенче кӑна вӗренни ҫителӗклӗ пулма пултарать-и вара?

Ҫук, пултараймасть. Кружоксем урӑмӑна вӗрентес меслетпех пирӗн пур пек майсем пӗтмеҫҫӗ-ха. Кӗнекесем, хаҫатсем, журналсем, типографисем, издательствасем—ҫаксем пурте пирӗн ҫӗршывра халӑхалӑнче тӑраҫҫӗ, ҫаксем пурте вӗсем политикӑлӑ пӗлӗве сарса пыма, пропагандӑ ӗҫне тӗмӗн пек анлӑ сарса йама пысӑк майсем туса параҫҫӗ. Анчах мӗн пулса тӑрать-ха практикӑра?

„ҪАВ МАЙСЕМПЕ УСӐ КУРАС ВЫРӐННЕ,—тенӗ Тӗпком постановленийӗнче,—ПАРТИ ОРГАНИЗАЦИСЕМ, ХАЛЬХИ УСЛОВИСЕНЧЕ КРУЖОКСЕМ ЕНТЕ ХАМӐРӐН КАДРСЕНЕ БОЛЬШЕВИСӐМА ВӖРЕНТМЕЛИ ТӖП МЕСЛЕТ ПУЛМА ПУЛТАРАЙМАННИНЕ. КАДРСЕНЕ МАРКСИСӐМ-ЛЕНИНИСӐМА ВӖРЕНТМЕЛИ ТӖП МЕСЛЕТ БОЛЬШЕВИКСЕН АСЛӐРАХ АРАВӖН ОПЫЧӖПЕ ТӖРӖСЛЕННӖ МЕСЛЕТ—БОЛЬШЕВИКСЕН ПАРТИН ИСТОРИПЕ ТЕОРИНЕ ХАРПӐРХӐЙ ТӖЛЛӖН ВӖРЕНЕССИ ПУЛМАЛИНЕ, ПАРТИН КАДРӖСЕНЕ ВӐЛ ТӖЛӖШПЕ ПИЧЕТ УРЛӐ ТАТА ВӖСЕН ВӖРЕННӖ ЧУХНЕ ТУХСА ПЫРАКАН ЫЙТУСЕМ ТӐРӐХ ЦЕНТРАЛИЗАЦИЛӖ ПЫСӐК КВАЛИФИКАЦИЛӖ КОНСУЛЬТАЦИПЕ, ЛЕКЦИСЕМПЕ, ДОКЛАДСЕМПЕ Т. ЫТ. ТЕ ПУЛӐШМАЛИНЕ ШУТА ИЛМЕСӖР, ХАЛӖ ТЕ ПРОПАГАНДӐН КИВӖ ФОРМИСЕНЧЕН ҪАТӐРЛАСА ТЫТСА ПЫРАҪҪӖ".

Пичетри пропагандӑна манни, кружоксен хисепӗ хыҫҫӑн кайса, пурне те „хутшӑнтарассишӗн" хӑвалани пурпӗрех пропагандӑ ПАХАЛӐХӖ начарланасси патне илсе пынӑ. Парти организацисем хӑш чухне коммунистсем ҫине школьниксем ҫине пӑхнӑ пек пӑхнӑ, вӗсене пурин ҫинчен те хӑйсем ӑнлантарса пама тӑрӑшнӑ, вӗсем ҫын хӑй тӗллӗн вулама пултарас, вуланине ӑнланса илме пултарас, ӑнланмасть пулсан—тепӗр хут вуласа тухас йе ытларах хатӗрленнӗ йулташран ыйтса пӗлме пултарас шухӑша пуҫа илме те пултарайман.

Пичетри пропагандӑ вӑл—пропагандӑн ытларах кучухнехи форми пулать. Пуҫ пулса тӑракан, ӗҫе татса паракан роль, сӑмах та ҫук, ӑна тивмеле. Вӑл сӑмахлӑ пропагандӑран вӑйлӑрах. Пичетри пропагандӑн вӑйӗ—пичетри сӑмах пӗр харӑс мӗлйунсен тивлечӗ пулса тӑнинче. Пичетчи инҫетри кӗтессене ҫитет, пичет вӑл—парти куллен-кун, сехетрен-сехете массӑсемпе партине хӑйне кирлӗ чӗлхепе калаҫса тӑракан средствӑ. Ленинпа Сталин пичете йаланах пысӑк вырӑна хунӑ. Пичет вӑл, Сталин йулташ каланӑ тӑрӑх, „пирӗн партин чи ҫивӗч, чи вӑйлӑ орудийӗ". Пичетри пропагандӑ ҫинчен манасси вӑл—массӑсене идеологи йенчен воспитани парас ӗҫри хамӑрӑн пур пек майсене ансӑрлатни, хамӑрӑн средствӑсене чакарни пулать. Кружокра вӗрентекен лайӑх пропагандис ҫирӗм-вӑтӑр вӗренекен интересне килӗшме пултарать, ҫав пропагандис тунӑ лекцинех журналра йе хаҫатра пичетлесе кӑларас пулсан, ӑна вара ҫӗршер пин, тата ытларах—мӗлйуншар ҫын вуласа тухма пултарать. Лайӑх консультант парткабинетра вуншар активиса кӑна пулӑшма пултарать, вӑл хӑйӗн консультацине пичетре кӑларас пулсан, ун валли мӗлйунлӑ аудитори пулса тӑрать. Пичет, ҫаксемсӗр пуҫне тата, партин пропагандӑлӑ тата теорилӗ вӑйӗсене ӳсме пулӑшать, вӗсене пӗтӗм ҫӗршывӗпе паллӑ ҫынсем туса хурать.

ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ „ПСК(б) Историн Кӗске курсне" кӑларнӑ май парти пропагандине йӗркелесси ҫинчен йышӑннӑ постановленийӗ пичетри пропагандӑна сӑмахлӑ пропагандӑ организацинчи сийенлӗ уйрӑмлӑха пӗтерчӗ. „Марксисӑм-ленинисӑм пропагандинче,—тенӗ постановленире,—тӗп тата ӗҫе татса паракан хӗҫпӑшал пичет—журналсем, хаҫатсем, брошӳрӑсем пулса тӑмала, сӑмах вӗҫҫӗн пропагандӑ туни вара пулӑшса пыраканӗн вырӑнне йышӑнмала". Тӗпком парти пропагандипе агитаци пайӗсене Тӗпком аппаратӗнче те, ҫавӑн пекех тата нацкомпарти Тӗпкомӗсен, крайкомсен, обкомсен аппарачӗсенче те пичетпе издательствӑ пайӗсемпе пӗрлештермеле турӗ. Пропагандӑпа агитацин пӗрлӗхлӗ пайӗсем марксисӑм-ленинисӑм пропагандипе политикӑлӑ-массӑлӑ агитацин пӗтӗм пичетри тата сӑмах вӗҫҫӗн тумали ӗҫе пӗтӗҫтерсе тӑраҫҫӗ.

Большевикла пичет умне пысӑк тата питех те ответлӑ задачсем лартнӑ. Унӑн пропагандӑ ӗҫӗнче хӑйне тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнмала. Парти Тӗп Комитечӗ пӗтӗм парти организацисене „ПИЧЕТ МАРКСИСӐМ-ЛЕНИНИСӐМАН ПАХАРАН ТА ПАХА ОРУДИЙӖ ТАТА ПРОПАГАНДӐН ПӖТӖМ СОЙУЗРИ ТРИБУНЕ ПУЛНИНЕ ХАКЛАМАСАР ТӐНИНЕ ПӖТЕРМЕ" хушрӗ. Марксисӑм-ленинисӑм пропаганди ӗҫӗнче пичет рольне хӑпартас пулать, пичет работникӗсене пропагандӑ йенӗпе парти лартнӑ задачсене уҫҫӑн пӗлсе тӑмала тӑвас пулать. Пичет работникӗсен Сталинла Тӗп Комитет пичет ҫине хунӑ пысӑк шанӑҫпа хавасланса, хӑйсен пӗтӗм вӑйне ҫак шанӑҫа тӳрре кӑларас ӗҫе хумала.

Умра сахал мар ӗҫсем тӑраҫҫӗ тата пысӑк, тӗплӗн шухӑшласа тумали, хыпаланса ӳкиве, пурне те пӗлнӗ пек пулнине чӑтма пултарайман, пысӑк пӗлӳ ыйтакан, ҫине тӑрса ӗҫлеме, активпа анлӑн ҫыхӑнса тӑма ыйтакан ӗҫ тӑрать. Пирӗн хаҫатсемпе журналсенче ӗҫлекен йулташсем ҫак умра тӑракан ӗҫе хӑйсен вӑйӗпех тума шутлаҫҫӗ пулсан, пысӑк йӑнӑша кӗрсе ӳкеҫҫӗ. Ҫавӑн пек шухӑшлама ҫӑмӑлттайсем, пурне те пӗлнӗ пек вӗҫкӗнленекенсем кӑна пултараҫҫӗ. Ун пек шухӑшлӑ ҫынсен большевикла журналистикӑпа пӗрлӗхли нимӗн те ҫук. Ӑнланас пулать, сӑмах кӗске вӑхӑтлӑ кампани ҫинчен мар, нумай вӑхӑта пыракан, тарӑнӑн, питех те ответлӑн тумали ӗҫ ҫинчен пырать. Ҫакӑ вӑл пичет руководителӗсемпе работникӗсенчен ӗҫ ҫине тепӗр майлӑ пӑхма хушать, вӗсен хӑйсен ӗҫне чылайах ҫӗнетмеле, хӑйсем ҫине хыттӑнрах пӑхмала, пуринчен ытла — партипе комсомол хаҫачӗсенче ҫӗнӗрен организациленекен пропагандӑ пайӗсене тӗрӗсленнӗ, теори йенчен хатӗрленнӗ йулташсене суйласа илмеле, редакцисен пропагандӑ пайӗсенче ӗҫлеме лайӑх пропагандистсене хутшӑнтармала. Ҫакӑн пек условисем пулсан анчах ӗҫ ӑнӑҫлӑ пулма пултарать.

Мӗнтен пуҫламала? Хӑшпӗр обкомсемпе облӑҫри хаҫатсем паха пуҫарулӑхсем кӑтартма пуҫларӗҫ те ӗнтӗ. Ҫавӑн пек, ПСК(б)П Винницӑ обкомӗпе облӑҫри „Большевистская Правда" хаҫат редакци Винницӑри чи лайӑх пропагандистсене, историксене, философсене, економистсене канашлӑва пухнӑ. Ҫак канашлура ПСК(б)П Тӗпком постановленине сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, хаҫатра ПСК(б)П историйӗн пирвайхи сыпӑкӗ тӑрӑх пичетлесе кӑлармали теорилӗ статйасемпе консультацисен планне тӗллесе хунӑ. „Большевистская правда" тӑнӑ ҫул — тӗрӗс ҫул. Чӑн малтан хаҫата пропагандистсен чи лайӑх вӑйӗ хутшӑнса ӗҫлемеле тӑвас пулать, хаҫатсӗмпе журнал редакцисем тавра теори йенчен ытларах хатӗрленнӗ йулташсенчен тунӑ актив пӗтӗҫсе тӑмала.

Пирӗн хаҫатсем, пропагандисла журналсем, партин теорилӗ органӗ тата марксисӑм-ленинисӑм ыйтӑвӗсем тӑрӑх пӗтӗм Сойузри консультаци пулса тӑракан „Большевик" журнал марксисла-ленинла теорине пропагандӑлас ӗҫре нумай ӗҫсем тума пултараҫҫӗ. Марксисӑм-ленинисӑм ыйтӑвӗсем тӑрӑх ҫырнӑ теорилӗ статйасем, консультацисем, лайӑх пропагандистсем ҫырнӑ лекцисем, вулакансен „ыйтӑвӗсем" ҫине панӑ „ответсем", методикӑлӑ кӑтартусем—акӑ мӗнсем пулмала журналсемпе хаҫатсен страницисенче, акӑ мӗн пулӑшать ӗнтӗ пирӗн интеллигенцине марксисӑм-ленинисӑма харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренес ӗҫре. Пӗтӗм ыйту—пичетӗн пропагандӑ ӗҫӗ хамӑрӑн кадрсене идейӑ йенчен воспитани парас задача ҫураҫулӑ пулмала тӑвассинче.

Большевикла пичет хӑй мӗн пуҫланнӑранпах партин аслӑ ӗҫне туса пынӑ. Нимӗн иккӗленмели те ҫук, пирӗн пичет, парти организацисем йертсе пынине, хӑй умӗнче тӑракан задачсене туса пыма пултарӗ, вӑл, Сталинла Тӗп Комитет ыйтнӑ пек, пӗтӗм Сойузри трибунӑ пулса тӑрӗ.

(„Правда" умстатйи, 1938 ҫ. нойабӗрӗн 19-мӗш).

Йеврейсене погромсем тунӑ пирки тарӑхасси Америкӑра ӳссе пырать

Германи фашисӗсем йеврейсене хирӗҫ пуҫласа йанӑ тискер кампани Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенчи халӑха йулашки ҫулсенче пулса иртнӗ пур событисенчен те ытларах пӑшӑрхантарса ӳкернӗ.

Правительствӑ ҫыннисем, профсойузсем, ытти массӑлӑ организацисем, Америкӑри пӗтӗм хаҫатсем, паллӑ писательсем, интеллигенцин тӗрлӗ представителӗсем Германи фашисӑмӗн варвӑрла ӗҫӗсене хыттӑн сивлеҫҫӗ. Америкӑра тухса тӑракан хаҫатсем куллен-кун фашисла погромщиксен варвӑрла ӗҫӗсем пирки паллӑ деятельсем тарӑхса хӑйсен шухӑшӗсем ҫинчен каласа панисене пичетлесе пыраҫҫӗ. Ҫакӑн пек пӗлтерӳсенех радио тӑрӑх каласа параҫҫӗ. Америкӑри общественнӑҫ ытла та тарӑхса ҫитнипе, Нью-Йоркра тата ытти хуласенче Германи консульствисене, ҫавӑн пекех тата портсенче тӑракан Германи пӑрахучӗсене, халӑх пырса тапӑнасран, кунӗнҫӗрӗн полицисем хурал тӑраҫҫӗ.

Америкӑри ӗҫ федерацийӗн (профсойузсен пӗрлешӗвӗн) председателӗ Грин федерацине кӗрекен пур профсойузсем патне те ҫыру йанӑ, вӑл халех фашисӑма хирӗҫ кампани пуҫласа йама сӗнет. „Германире фашиссем тӑвакан тискерлӗхсем пек хӑрушӑ тискерлӗх,—тет хӑйӗн ҫырӑвӗнче Грин,—халиччен тӗнче историнче пулман. Епӗр ҫак тискерлӗхе хирӗҫ протеслетпӗр, Америкӑ халӑхне Германи правительствин варвӑрла политикине хирӗҫ кӗрешме пӗтӗм прогрессивлӑ вӑйсене мобилизацилес ӗҫре пулӑшу пама чӗнетпӗр".

Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенчи йустици министрӗ Кеммингс: Германире йеврейсене погромсем туни пӗтӗм тӗнчене кисретрӗ, тесе пӗлтернӗ. „Германири ӗҫсем, тенӗ Кеммингс, ӑстӑн вырӑнне тискер вӑй ӗҫлеме пуҫласан мӗн пулса тухма пултарнине кӑтартрӗҫ. Ҫак тискерлӗхсем вӑтам ӗмӗрсенче пулнӑ тӗттӗм вӑхӑтсене аса илтереҫҫӗ".

(ТАСС).

Рузвельт зайавленийӗ

Пичет представителӗсене йышӑннӑ чухне, Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен президенчӗ Рузвельт вӑл ӗҫ министерствине нумайах пулмасть Австрипе Германирен Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсене тарса пынӑ беженцӑсене пурӗ 12.000 ҫынна Америкӑра тата тепӗр 6 уйӑх хушши пурӑнма ирӗк пама хушни ҫинчен пӗлтернӗ. Рузвельт каланӑ: Конгрес (парламент) хирӗҫмест пулсан, вӗсене правительствӑ Америкӑрах йулма ирӗк парать. „Епӗр ҫак беженцӑсене Германине кайала йама ирӗксӗрлес пулсан, ытла та тискер тата ҫынсем пек мар хӑтланнӑ пулаттӑмӑр, мӗншӗн тесен, вӗсене Германине кайала тавӑрсан концентрацилӗ лагерсене хупса лартаҫҫӗ йе ытти майсемпе хӗсӗрлеме пуҫлаҫҫӗ", тенӗ Рузвельт.

(ТАСС).

Германи фашисӗсен намӑссӑр требованийӗсем

Прагӑран пӗлтернӗ тӑрӑх, Германи правительстви Чехословаки правительстви патне секретлӑ нотӑ йанӑ, вӑл нотӑра Германири йеврейсене хирӗҫ кӑларнӑ пӗтӗм саккунсене пӗтӗмӗшпех Чехословакире ӗҫе кӗртме хушнӑ. Германи правительстви тата Чехословаки правительствине: Чехословаки министрӗсем тата пулас президент мӗнле расӑлӑ ҫынсем,—тесе ыйтнӑ.

(ТАСС).

„Англипе Германи хушшинчи туслӑх обшчествин" председателӗ отставкӑна тухнӑ

Англин транспӑрт министрӗ пулнӑ лорд Маунт Темпл „Англипе Германи хушшинчи туслӑх обшчӗствин" председателӗ пулма пӑрахни ҫинчен пӗлтернӗ. Вӑл: ҫак вырӑнтан Германире йеврейсене хӗсӗрленӗ пирки тухатӑп, тенӗ.

(ТАСС).

Германире охраннӑй отрйад членӗсемпе офицерӗсене персе пӑрахни

Нью-Йоркра тухакан хаҫат „Уорлдтелеграмм" пӗлтернӗ тӑрӑх, нумайах пулмасть, Германире 40 ҫынна персе пӑрахнӑ. Вӗсем Рейхенхоллра (Бавари) радиостанцинче ӗҫлекен охраннӑй отрйад членӗсемпе офицерсем пулнӑ. Хаҫат каланӑ тӑрӑх, Германи правительстви вӗсене Чехословакипе Швейцарире ӗҫлекен кӗске хумлӑ радиостанцисем фашиссене хирӗҫле паракан радиопередачӑсене кирлӗ пек пӗтерме пултарайманшӑн айӑплавӑ. Рейхенхоллри радиостанцин задачӗ—фашисӑма хирӗҫле паракан радиопередачӑсене пӗтерсе лартасси пулать.

(ТАСС).

Китайри вӑрҫӑ

Кӑнтӑр Китайра Китай ҫарӗсем (Кантон ҫинеле контрнаступлени туса пыракан ҫарсем) йапонӗцсене халь те хӗссе пыраҫҫӗ, вӗсем хула хӗррисем патне ҫитнӗ те ӗнтӗ. Кантон патне пымали вырӑнсене сыхлакан Иапонин тӗп вӑйӗсем кайала чакса хулана кӗвӗ, унта ҫӗнӗ вӑйсем пырса ҫитессе кӗтеҫҫӗ. Кантон патӗнчен ҫурҫӗр йеннеле, 12 километртра, Ҫаопин станци сывӑхӗнче хайар ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Кӑнтӑр Китайа Йапонин ҫӗнӗ вӑйӗсене илсе пыраҫҫӗ. Йулашки кунсенче вунӑ пин ҫын ытла илсе пынӑ. Кантон патне Йапонин ҫар карапӗсемпе транспӑрчӗсем 40 ытла пырса ҫитнӗ, вӗсем ҫинче ҫарсем.

Лушань патӗнче (Центр Китайри Цзйанси провинцин ҫурҫӗр пайӗ) Китай партизанӗсене тата регулярлӑ чаҫӗсене хирӗҫ ҫапӑҫакан Йапони ҫарӗсен ӗҫӗсем ӑнӑҫсӑр пулнӑ. Йапонӗцсен пур атакисене те ҫӗмӗрнӗ, вӗсене пысӑк тӑкаксем кӳнӗ. Китай чаҫӗсем вӑрҫӑ хатӗрӗсем нумай туртса илнӗ.

(ТАСС)

Китай ҫарӗсем стройра.
Р. Кармен фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

ССР Сойузӗн Тинӗс-Ҫар Халӑх Комиссарӗ 1-мӗш рангри командарм М. П. Фриновский йулташ.
(Союзфото).

Испанири фронтсенче

Нойабӗрӗн 15-мӗшӗнчен 16-мӗшнехи каҫ республикӑ ҫарӗсем Ебро йуханшывӗ (Хӗвелтухӑҫ фронт) урлӑ каҫса хӑйсен сулахай йенчи малтанхи позицисенче ҫирӗпленсе ларнӑ.

Ҫак ҫулти ийулӗн 26-чех республиканӗцсем, фашиссен вӑйӗсене Левант фронтӗнчен парса йамала тӑвас шутпа, Ебро йуханшывӗн сылтӑм йенне каҫнӑ пулнӑ. Ҫакӑн пек чаплӑ наступлени хыҫҫӑн, фашиссем Валенҫи патне (Левант фрончӗ) наступлени туса пырассине чарса лартнӑ. Пӑлхавҫӑсен, хӑйсен вӑйӗсене Левант фронтӗнчен Ебро фронтне илсе пымала пулнӑ.

Республикӑ командовани Ебро йуханшывӗн сылтӑм ҫыранне хӑйӗн аллинче пӗр уйӑх хушши тытса тӑма шутланӑ. Тӑшман вӑйӗ пур йенчен те пысӑкрах пулнӑ пирки ҫакӑнта тытӑнса тӑма республиканӗцсене ҫӑмӑлах пулман. Анчах та республиканӗцсем ҫак вырӑна хӑйсем малтан шутласа хунинчен те ытларах, 4 уйӑх хушши тытса тӑнӑ. Пӑлхавҫӑсем 7 хутчен наступлени тунине сирсе пӑрахнӑ. Ҫапла вара фашиссен Валенҫи ҫине наступленни тӑвас планне пӗтерсе лартнӑ. Ебро фронтӗнче фашиссем 80,000 салтак, 214 самолет ҫухатнӑ.

Республикӑ командовани хӑйӗн снарйаженисемпе ҫарӗсене Ебро йуханшывӗн сулахай ҫыранне пӗтӗмпех йӗркелӗн каҫарса ҫитернӗ. Ебро йуханшывӗ ҫинче республиканӗцсен операцийӗ ӑнӑҫлӑн, командовани планӗпе ҫураҫулӑн пулса иртнӗ. Вӑл республикӑ ҫарӗ тунӑ стратегилӗ пысӑк ҫӗнтерӳ.

Сегре йуханшывӗ районӗнче (Сегре — Еброна йухса кӗрет) республиканӗцсем нойабӗрӗн 7—8-мӗшӗсенче, Леридӑна хупӑрласа илес шутпа, наступлени пуҫласа йаначчӗ. Ҫак районра республиканӗцсем тӑшман контратакисене пурне те ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Республиканӗцсен наступлени ӑнӑҫлӑн сарӑлса пырать.

(ТАСС).

Испани хӗрарӑмӗсем чӗнсе калани

Барселонӑра республикӑлӑ Испанири амӑш-хӗрарӑмсем пӗтӗм ҫӗршывсенчи амӑшсене чӗнсе каланине пичетлесе кӑларнӑ.

„Испани хӗрарӑмӗсем, — тенӗ чӗнсе каланинче,—Испанири фашиссене тата йут ҫӗршывсенчи захватчиксене хирӗҫ вӗсене йӑлтах ҫӗнтериччченех кӗрешӗҫ. Анчах Испанири пӗчӗк ачасене вилӗмрен ҫӑлса хӑварас пулать. Пӗчӗк ачасене выҫӑхса тата шӑнса вилме пама йурамасть. Пӗтӗм тӗнчери амӑшсем, республикӑлӑ Испани ачисене пулӑшу парассине организацилӗр".

Чӗнсе калани ҫине Пасионарийа, Испани республики президенчӗн арӑмӗ тата нумай хӗрарӑмсем, Испанири обшчествӑлӑ ӗҫри пысӑк деятельсем алӑ пуснӑ.

(ТАСС).

Чехословаки парламенчӗн ҫӗҫҫийӗ уҫӑлни

Нойабӗрӗн 17-мӗшӗнче Чехословаки парламенчӗн кӗркуннехи ҫӗҫҫийӗ уҫӑлнӑ. Малтанхи ларура пӗтӗм республикӑ правительствин, Словаки правительствин, Закарпатски Украинӑ правительствин пур членӗсем те пулнӑ.

Ҫӗҫҫи кун йӗркинче — Словаки автономийӗ ҫинчен саккун йышанасси тата ҫакна май конституцине улӑштарасси, правительствӑна чрезвычайнӑй полномочисем парасси тата президент суйласси.

Лару пуҫламӗшӗнче премйер-министр Сыровы генерал правительствӑ декларацине вуласа панӑ. Тулашри политикӑ ҫинче чарӑнса тӑрса, Сыровы: Чехословаки пур государствӑсемпе те килӗшӳлӗн пурӑнасшӑн, уйрӑмӑнах — „хӑйӗн кӳршӗпе — Германипе килӗшӳлӗ пуласшӑн", тенӗ.

Правительствӑ умӗнче тӑракан ҫывӑхри задачсем ҫинчен — ҫӗнӗ чикӗри економикӑ строительстви, ӗҫсӗрлӗхпе кӗрешесси, оккупаци тунӑ районсенчен тарса тухнӑ беженцӑсене вырнаҫтарасси т. ыт. ҫинчен каланӑ хыҫҫӑн, Сыровы правительствӑна чрезвычайнӑй полномочисем пама ыйтнӑ.

Йулашкинчен Сыровы генерал ҫитес ернере ҫӗнӗ президент суйлама национальнӑй собрани пухасси ҫинчен пӗлтернӗ.

Правительствӑ декларацине итленӗ хыҫҫӑн, парламент кун йӗркинче тӑракан малтанхи ыйтӑва сӳтсе-йавма тытӑннӑ. Коммунисла депутат Запотоцкий премйер-министр декларацийӗ тӑрӑх прени пуҫласа йарасси ҫинчен панӑ сӗнӗве парламент йышӑнман. Словаки автономи ҫинчен кӑларма хатӗрленӗ саккун пройектне пӑхса тухма парламент комиҫҫине панӑ. Нойабӗрӗн 18-мӗшӗнче саккун пройектне сӳтсе-йавма тытӑннӑ.

(ТАСС).

Командир-артиллериҫсен ҫӗнӗ отрйачӗ

ЛЕНИНГРАД. Нойабӗрӗн 19-мӗшӗнче Ф. Е. Дзержинский йачӗпе тӑракан Ленин орденлӗ артиллери академинчен командирсемпе инженерсен пӗр ушкӑнне вӗрентсе кӑларнӑ.

Ку вӑл Хӗрлӗ Ҫар речӗсем валли ҫӗнӗ вӑй. Вӗренсе тухнисен 36,3 проценчӗ государствӑ екзаменӗсене отличнӑ панӑ. Вӗренсе тухнисенчен нумайӗшӗ гражданвӑрҫинче пулнӑ. „XX лет РККА" медальпе наградӑланӑ ҫынсем.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Самокритикӑна йуратмала

Ентрийелӗнчи (Шӑхасан р.) пуҫламӗш парторганизацин апрел уйӑхӗнче пулса иртнӗ отчотпа суйлав пухӑвӗнче коммуниссем парторганизацин ӗҫне малала лайӑхлатма ырӑ сӗнӳсем парса хӑварнӑ. Ҫав сӗнӳсем коммуниссен йышне ӳстерессе, коммуниссен вӗренӳ ӗҫне лайӑхлатасси, парти хуҫалӑхне йӗркелесси, организацинче критикӑпа самокритикӑна вӑйлатасси, комсомол организацин ӗҫне йертсе пырассине лайӑхлатасси ҫинчен пулнӑ.

Ку сӗнӳсене пурнӑҫлас тесе парторганизаци (парторгӗ Семенӑвӑ йулташ) хӑшпӗр ӗҫсем тунӑ. Суйлав иртнӗренпе пӗр кандидата члена куҫарнӑ, икӗ ҫынна ПСК(б)П членӗн кандидатне илнӗ, халӗ тата пӑхса тухмали пӗр зайавлени пур. Парти хуҫалӑхӗ йӗркеленсе пырат̆. Парти пухӑвӗсене малтанах хатӗрленсе иртерме пуҫланӑ. Комсомол организацине йертсе пырас тӗлӗшпе коммуниссемпе комсомолӗцсен пӗрлешӳлӗ пухӑвне туса иртернӗ.

Анчах та Ентрийелӗнчи пуҫламӗш парторганизацинче коммуниссем отчотпа суйлав пухӑвӗнче панӑ сӗнӳсене йӗркелӗ пурнӑҫласа пыраҫҫӗ теме ҫук-ха.

Ентрийелӗнче ПСК(б)П историне вӗренме тесе кружоксем тунӑ. Анчах икӗ кружокӗнче те ПСК(б)П историне тарӑнӑн вӗренме тытӑнман-ха. Коммуниссем, Михайлӑв йулташсӑр пуҫне, хӑйсем тӗллӗн ҫине тӑрса вӗренмеҫҫӗ. ПСК(б)П историне I-мӗшпе II-мӗш сыпӑкӗсене ҫеҫ вуланӑ.

Нойабӗрӗн 10-мӗшӗнче ПСК(б)П историне вӗренекенсем валљи консуљтаци пулчӗ. Анчах вӑл консуљтацине пурте пыман.

Пӗр Михайлӑв йулташӑн ҫеҫ килӗнче библиотекӑ пур. ПСК(б)П историне вӗренме кирлӗ кӗнекесем те унӑн ҫеҫ пур. Чылайӗшӗ хаҫат-журналсем те ҫырӑнса илмеҫҫӗ.

Парти ӳсӗмӗ ҫителӗксӗр. Йалта 10 комсомолӗц, вӗсенчен парти ретне пӗрне ҫеҫ илнӗ. Парти ӳсӗмӗ тӗлӗшпе организацинче чӑрмавсем пур-ха. Акӑ, комсомолӗц Константинӑв йулташ парти ретне кӗме хатӗрленсе ҫитнӗ пулнӑ. Нойабӗрӗн 1-мӗшӗнче пулнӑ пухура Константинӑв ӗҫне пӑхса тухмала пулнӑ. Пухурах „инкек“ сиксе тухнӑ. Малтанхи доклад тӑрӑх Константинӑв йалти ҫитменлӗхсене, ҫавӑнпа пӗрлех Тимофейӗвӑ йулташа критикленӗ. Константинӑв хыҫҫӑнах Тимофейӗвӑ сиксе тӑнӑ та: „Есӗ мана критиклеме пултараймастӑн“, тенӗ. Константинӑва парти ретне кӗме панӑ хӑйӗн рекомендацине кайала илнӗ. Вара Константинӑвӑн ӗҫне пӑхса тухайман. Ку ӗнтӗ Тимофейӗвӑ самокритикӑна йуратманнине кӑтартакан факт та ҫеҫ мар. Ку факт пуҫламӗш парторганизацинче самокритикӑ кирлӗ вырӑнта маррине, ӑна хӗсекенсем пуррине кӑтарт̆. Коммуниссем комсомол организацине пулӑшса пыраҫҫӗ теме те ҫук кун хыҫҫӑн. Ку ӗҫ ҫинчен ҫав пухурах сӳтсе-йавмала пулнӑ пулсан, пуҫламӗш организаци пайан кун та сӳтсе-йавман-ха.

С. Соколов.

Суйлавсем самокритикӑна анлӑн сарнипе иртеҫҫӗ

ПСҪЛКС Ишлей райкомӗ пуҫламӗш комсомол организацисен отчотпа суйлав пухӑвӗсене иртерме ҫирӗп план тӑрӑх тытӑнчӗ.

Ку таранччен отчотпа суйлав пухӑвӗсем 55 организацисенче пулса иртнӗ. Ку пухусенче 353 комсомолӗц тухса каланӑ.

Пухусенче йапӑх ӗҫленӗ комсомолӗцсемпе комсоргсене критиклесе, йертсе пыма пултарайманнисене йертсе пырас ӗҫрен сирсе хӑвараҫҫӗ, хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнӑ ҫынсене суйлаҫҫӗ.

„Ҫӗнӗ Шурча“, „Хӗрлӗ оччӑ“, „Волгарь“ колхозсенчи комсомол организацисенче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе йапӑхтарнӑ, комитет ҫекретарӗсем йала тӗлӗшӗнчен пӑсӑлса кайнӑ пулнӑ, йалти ҫамрӑксем хушшинче ӗҫлемен. Ку организацисенче отчотпа суйлав пухӑвӗсем комитетсен ӗҫӗсене начар, тесе хакланӑ.

МТС ҫумӗнчи комсомол комитет ҫекретарӗ Хлебникӑв йапӑх ӗҫлесе пынӑ, 15 уйӑх хушшинче те 4 ҫамрӑка ҫеҫ комсомол ретне илнӗ. Ку комитета МТС директӑрӗн помошникӗ С. Михайлӑв, вӑлах парторганизатӑр, ӗҫре пулӑшса пыманнинчен те килнӗ. Кунта комитета суйланӑ чухне ПСҪЛКС Тӗпкомӗн инструкцине пӑснӑ.

Комсомол организацийӗсем лайӑх ӗҫленӗ ҫӗрте отчотпа суйлав пухӑвӗсем те активлӑ иртеҫҫӗ. „Автогигант“ колхоз ҫумӗнчи комсомол комитечӗн ҫекретарӗ Г. Игнатйӗв йулташ, „Коммунист“ колхоз ҫумӗнчи комсомол организацинче В. Гуснов тата „Бољшевик“ колхоз ҫумӗнчи Ваҫилйӗв пуху пуласси ҫинчен виҫӗ кун малтан пӗлтерсе хунӑ. Ку организацисенче пухӑва пур комсомолӗцсем те вӑхӑтра пухӑннӑ, отчот тӑрӑх пур комсомолӗцсем те тухса каланӑ.

Партин хӑшпӗр организацисемпе уйрӑм коммуниссем комсомолӑн отчотпа суйлав пухӑвӗсене иртерессине кирлӗ пек хакламаҫҫӗ. Тивӗш йалсоветӗнчи Михайлӑвӑ, Красновӑ тата Каманин йачӗпе тӑракан колхозри Г. Толстов коммуниссем „комсомолӗцсемпе ӗҫлесси пирӗн ӗҫ мар“ теҫҫӗ пулас, ҫавӑнпа та комсомол организацисене пулӑшса пымаҫҫӗ.

Отчотпа суйлав пухӑвӗсенче вырӑнти ӗҫе тишкӗрнипе пӗрлех, ПСҪЛКС Обкомӗ ҫителӗксӗр йертсе пынине те кӑтартса хӑвараҫҫӗ. Отчотлӑ пухусем пулса иртнӗ 55 организацинчен 12 организацинче ПСҪЛКС райкомӗн ӗҫне ҫителӗксӗр тесе хак панӑ. Тухса калакансем комсомол райкомӗ комсомолӗцсене политикӑлӑ вӗрентес ӗҫе, пионерсемпе шкул ачисене политикӑлӑ воспитани парас ӗҫе ҫителӗксӗр йертсе пынӑ, тесе палӑртрӗҫ.

Д. Михайлӑвӑ.

ПСҪЛКС Ишлей райкомӗн политвӗренӳ пайӗн пуҫлӑхӗ.

Вӗренӳ пахалӑхӗшӗн

Ҫак кунсенче республикӑри пур шкулсем те кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗн малтанхи чӗрӗкӗнче тунӑ ӗҫӗсене тӗплӗн тишкӗрсе тухса, малала йепле ӗҫлемелине палӑртаҫҫӗ.

Пирӗн Исакӑвӑри (Трак р.) туллимар вӑтам шкул та, хӑйӗн ҫак чӗрӗкри ӗҫӗсене тишкӗрме тимлӗн хатӗрленсе пычӗ. Тӳррипе каласан, епӗр ку ӗҫе ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗн малтанхи кунӗсенчех тума тытӑннӑ. Кашни ача кашни кун мӗнле вӗреннине, мӗнле ӗҫленине тӗплӗн шута илсе пынӑ. Епӗр пуҫламӗшӗнченех Йаманакри туллимар вӑтам шкулпа ӑмӑрту догӑварӗ ҫирӗплетнӗ, хамӑрӑн шкулти мӗнпур вӗрентӳпе воспитани ӗҫне ун тӑрӑх туса пыратпӑр. Хаљ пирӗн шкулта класпа клас, ачапа ача ӑмӑртса вӗренеҫҫӗ. Ӑмӑрту догӑварӗсем мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине кашни уйӑхрах тӗрӗслесе тӑратпӑр.

Вӗренӳ ҫулне лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илни, пире умри ӗҫсене лайӑх туса пыма май пачӗ. Ҫуллахи вӑхӑтрах епӗр кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗ валљи кирлӗ таран хут, кӑранташ, чернил, перо, ручкӑ т. ыт. те хатӗрлесе хунӑ. Кашни ачанах 30-шар тетрат̆ таран салатса панӑ. Программӑ тӑрӑх вӗренмели пур дисциплинӑсемпе те уйрӑм тетрат̆сем тунӑ, вӑл тетрат̆сем ҫине ачасем урокра мӗн кирлине кӗскен ҫырса пыраҫҫӗ. Шкул малтан туса хатӗрленӗ ҫирӗп плансем, расписанисем тӑрӑх ӗҫлет.

Шкулпа учитӗлсен тӗп задачи — ҫирӗп вӗренӳ пахалӑхӗшӗн, ӑнланулӑ дисциплинӑшӑн кӗрешесси. Епӗр вӗренӳре кайа йулассине тата шкултан пӑрахассине хирӗҫ хытӑ кӗрешсе пынӑ. Ачасене вӗренӳре кирлӗ условисем ҫителӗклӗ таран туса пама тӑрӑшнӑ. Ачасене шкулта, урок вӑхӑтӗнче вӗрентнисӗр пуҫне, вӗсен ашшӗ-амӑшӗсемпе, тӑванӗсемпе ҫывӑх тӑрса, вӗсем хушшинче ӑнлантарулӑ ӗҫе организациленӗ. Клас руководитӗлӗсемпе уйрӑм учитӗлсем час-часах ачасен килӗсене, вӗсен ашшӗ-амӑшӗсем патне ҫӳреҫҫӗ, йалӑн-йалӑн ача ашшӗ-амӑшӗсен пухӑвӗсене туса иртереҫҫӗ.

Хаљ, вӗренӳ ҫулӗн малтанхи чӗрӗкӗ пӗтнӗ май ашшӗ-амӑшӗсен пухӑвӗсене 15 йалта туса, унта кашни ача ашшӗне йе амӑшне кам ачи мӗнле вӗренни ҫинчен, унӑн вӗренӳре, шкулта тата шкул тулашӗнче мӗнле ҫитменлӗхсем пурри ҫинчен тӗплӗн каласа панӑ.

Малтанхи чӗрӗкре, пӗтӗм шкулӗпе илсен, ачасем шкула 93,4 процент ҫӳренӗ шутланат̆. Ку шута чирлесе кун сиктернисене те илнӗ. Паллах, ачасем шкула пурте тӗрӗс ҫӳреҫҫӗ теме пултараймастпӑр. Пирӗн шкула ачасем вӗренме 15 йалтан пыраҫҫӗ. Хӑшпӗр ачасем 7—8 ҫухрӑмран ҫӳреҫҫӗ. Ҫавӑнпа та инҫетри йалсенчен пыракан ачасем, ҫанталӑк пӑсӑлнӑ вӑхӑтсенче, ирӗксӗрех кун сиктерсе йулаҫҫӗ. Хӑшпӗр колхоз правленисем ачасене шкула леҫесси ҫинчен пачах та шутламаҫҫӗ. Сӑмахран, Шупуҫӗнчи, Вӑрманкасри, Шӑнарти, Шурҫырмари колхоз правленисене учитӗлсем ачасене шкула леҫес ӗҫе йӗркелес пирки темиҫе хут та каланӑ ӗнтӗ, анчах вӗсем ку ӗҫ ҫине ҫавӑрӑнса та пӑхмаҫҫӗ. Райҫӗрӗҫ пайӗ пире кун пирки кӑтарту паман, — тесе кутӑнлашаҫҫӗ.

Пирӗн шутпа, хӗле кӗнӗ май, ку ыйтупа ҫутӗҫ оргӑнӗсем тата шкулсем интересленнисӗр пуҫне, ытти организацисен те тӗплӗнех шухӑшласа пӑхмала пек.

Ачасем вӗренӳре ӗлкӗрсе пырасси пӗтӗм шкулӗпе 88,72 процент шутланат̆. Паллах, ачасем пур дисциплинӑсемпе те йапӑх вӗренеҫҫӗ теме ҫук. Кунта, пуринчен ытла, процент хисепӗ пӗчӗкки — ачасем вырӑс чӗлхипе тата чӑваш чӗлхипе ҫителӗклӗ таран ӗлкӗрсе пырайманнинчен килет. Ку айӑпа хаљ ҫав дисциплинӑсене вӗрентекен учитӗлсем ҫине ҫеҫ хума май ҫук. Кунта ҫак дисциплинӑсене ытти ҫулсенче йапӑх вӗрентни те пысӑк чӑрмав пулса тӑрат̆. Тепӗр йенчен чылай пуҫламӗш шкулсем, вӑтам шкулсене йапӑх вӗрентсе кӑларнӑ ачасем панинчен те килет.

Акӑ, пирӗн туллимар вӑтам шкул районне кӗрекен пуҫламӗш шкулсенчен хӑшпӗрисем кӑҫал та тӑваттӑмӗш классенчен начар вӗренекен ачасене лайӑх паллӑсем лартса, свидетӗлствӑсем парса кӑларнӑ. Чатукассинчи пуҫламӗш шкулпа (пуҫлӑхӗ Е. Волкӑвӑ) Ваҥушкассинчи (пуҫлӑхӗ Н. Аниҫимӑв) пуҫламӗш шкултан вӗренсе тухнисене вӗренме илнӗ чух, ачасем вӑтам шкулта вӗренмешкӗн 80—90 процент таран хатӗрленсе ҫитменни курӑнчӗ. Ку шкулсенчен вӗренсе тухнисем, кашни ҫул пекех, пиллӗкӗмӗш класра тин хӑйсен йачӗсене ҫырма вӗренеҫҫӗ. Асӑннӑ шкулсенче вырӑс чӗлхине начар вӗрентни ҫинчен каламали те ҫук.

Пуҫламӗш шкулсенче ытти дисциплинӑсене ҫителӗклӗ вӗрентменни ҫинчен каланипе пӗрлех, ачасене йурлама, картинӑ ӳкерме, физкуљтурӑна чӑтма ҫук начар вӗрентнине асӑрхаттарма тивет. Пуҫламӗш шкулсенче ку дисциплинӑсене, программӑ тӑрӑх сехетсем панӑ пулин те, хӑшпӗр ҫӗрте пачах вӗрентмеҫҫӗ темеле. Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ те ку дисциплинӑсене хакламаст̆. Кунта виҫ сӑмахлӑ программӑсем панисӗр пуҫне, урӑх нимӗнле кӑтарту та ҫук.

Паллах, ку ӗҫсене малашне те каплипех хӑварма йурамаст̆.

Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе райҫутӗҫ пайӗсем шкулсене оперативлӑ йертсе пыраймаҫҫӗ-ха. Ҫак ик-виҫ ҫул хушшинче пирӗн шкулта ҫутӗҫ оргӑнӗсенчен (ҫавӑн пекех ытти организацисенчен те) никам та пулман. Кун пек чух, паллах ӗнтӗ, шкулӑн хӑйӗн ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене вӑхӑтра курса, вӗсене ҫийӗнчех пӗтерсе пыма питӗ хӗн.

Уйрӑмах шкулти кружоксемпе ытти ирӗклӗ организацисен ӗҫне йӗркелес тӗлӗшпе Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ халиччен нимӗнле кӑтарту та паман. Вӑл мӗн пурӗ те ачасем тӗрлӗ предметсем тӑрӑх мӗнле ӗлкӗрсе пынин ҫара процентчӗсемпе ҫеҫ интересленет.

Паллах, шкулсене капла кӑна йертсе пынипе шкулти мӗн пур вӗренӳпе воспитани ӗҫне ҫителӗклӗ таран ҫӗклеме май ҫук.

Мих. Йурйӗв

Комсомолӗцсем ответлӑ ӗҫсенче

ҪӖМӖРЛЕ (хамӑр корр.). Кӑҫалхи ҫул районра темиҫе вуншар комсомолӗца ответлӑ вырӑнсене ӗҫлеме лартнӑ. Ҫак комсомолӗцсем хӑйсене шанса панӑ ӗҫсене пысӑк тимлӗхпе пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ.

Комбинатра чылай ҫулсем хушши подручнӑй рабочи, унтан електросварщик, учотчик пулса ӗҫленӗ Сашӑ Кондратйӗв йулташ хаљхи вӑхӑтра хула совет председателӗ. Вӑл комсомолӗц. Хӑйӗн пӗлӳне ӳстерсех пырат̆. Кӑҫал хула советӗнче ӗҫлеме пуҫличчен стахановӗцсен шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ. Халӗ ПСК(б)П историне вӗренет.

Кондратйӗв йулташ хӑйӗн ответлӑ ӗҫне ӑнаҫлӑн туса пырат̆. Секци руководитӗлӗсемпе, пай пуҫлӑхӗсемпе час-часах канашлусем туса иртерет, вӗсене конкретлӑ пулӑшу парат̆.

Иртнӗ ҫулта комбинатӑн цехӗсенче техноруксем пулса ӗҫленӗ Кусакин, Пономарйовӑ тата Мосолов йулташсем халӗ цех начаљникӗсем. Комсомолӗц Мосолов йулташ йертсе пыракан авса пукансем тӑвакан цех промфинплана уйӑхран уйӑха тултарса пырат̆. Октӑбӗр уйӑх планне 108 процент тултарнӑ. Кусакин йулташ стољарнӑй цех начаљникӗнче ӗҫленӗ хушӑрах ытти политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫсене те активлӑн хутшӑнат̆. Вӑл комбинатри комсомол комитечӗн пӗрремӗш ҫекретарӗ. Ӗҫе лайӑх туса пынипе кӑҫал комсомол ретне ҫӗнӗрен 120 ҫамрӑка илнӗ. Комбинатри комсомолӗцсене пурне те вӗренӳве йавӑҫтарнӑ. 71 комсомолӗц каҫхи вӑтам шкулта, 13 комсомолӗц рабфакра вӗренеҫҫӗ. 133 комсомолӗц „ГТО“ значокӗсен нормисене панӑ.

Производствӑра станочниксем, подручнӑйсем пулса ӗҫленӗ комсомолӗцсенчен ҫак йулашки ҫурҫулта бригадирсем, ҫменӑ мастӑрӗсем пулса ӗҫлеме куҫарнисем те сахал мар. Кӑҫал комсомола кӗнӗ стахановкӑ Климкинӑ йулташ кӗске вӑхӑт хушшинчех ӗҫ техникине алла илчӗ. Техминимум кружокӗнчен вӗренсе тухсан ӑна сушиљнӑй цеха бригадира лартрӗҫ. Рабочисем хушшинче социалисӑмла ӑмӑртупа стахановла йухӑма вӑйлатса йанӑ май унӑн бригади ҫулталӑк планне 9 уйӑх хушшинчех тултарчӗ.

Рйадовой колхозник пулнӑ Чернов, вулав ҫурт пуҫлӑхӗ пулнӑ Кириллӑв йулташсем хаљхи вӑхӑтра колхоз председателӗсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Чернов йулташ йапӑхса кайнӑ пулнӑ колхоза (Мыслец йалӗ) ҫирӗп ура ҫине тӑратрӗ. Колхоз тырпулсене уйхиртен ӑнаҫлӑн пуҫтарса кӗртрӗ, государствӑ умӗнчи обйазателствӑсене тултарчӗ.

Михаил Степанӑвич Занин йулташ.

Канашри вакунсем йусакан савӑтри каменщик, ӗҫ нормине 367 процент таран тултарат̆. Ана чукун ҫул ҫинчи хисеплӗ рабочисен значокне икӗ хут панӑ.

К. Бабайӗв фото-ӳкерчӗкӗ.

С. МИХАЙЛӐВ

ВӐРҪӐ ВУТНЕ ЧӖРТЕКЕНСЕМ

Пољшӑра сейма тата сената срукчченех салатса йарса ҫӗнӗ суйлавсем иртермеле туни ҫӗршыва хытӑ хускатса йанӑ. Уҫҫӑнах курӑнса тӑрат̆: сейма тата сената салатса йани Пољшӑра оппозицилӗ шухӑш-кӑмӑлсем ӳснипе, унӑн шалти политикӑлӑ лару-тӑрӑвӗ йӑвӑрланнипе ҫыхӑнса тӑрат̆. Пољшӑн фашисла хуҫисем ҫӗршыва тупика хуса кӗртнӗ. Пӗр економикӑлӑ кризисран тухаймасӑр, Пољшӑ тепӗр кризиса кӗрсе ӳкрӗ те ӗнтӗ. Промышлӗннӑҫ производстви чакса пырат̆. Мӗскӗн хресчен хирӗсем калама ҫук пӗчӗк тухӑҫлӑх параҫҫӗ. Йалта чухӑнлӑх ӳссе пырат̆. Хуласенче — ӗҫсӗр антӑраҫҫӗ. Ҫӗршывра ӗҫсӗр тӑрса йулнисем 2,5 мӗлйун ҫын шутланаҫҫӗ. Пољшӑри интеллигенци ку тӗлӗшпе пуринчен те ытларах асап курат̆. Ӗҫсӗр тӑрса йулнӑ вуншар пин учитӗлсем, техниксем, инженерсем хӑйсене валљи ӗҫлеме вырӑн тупаймаҫҫӗ. Йалти мӗлйуншар чухӑнсем ӗҫ шыраҫҫӗ. Йулашки вӑхӑтра ҫуралакансен шучӗ хытӑ чакни тата хӑйсене хӑйсем вӗлерекенсен шучӗ ӳссе кайни курӑнат̆. Пољшӑра ачасен тӑватӑ пайӗнчен пӗр пайӗ 15 ҫула ҫитиччченех вилсе пӗтет. Халӑха вӗрентме паракан укҫа-тенкӗ шучӗ ҫулсеренех чакса пырат̆. 1928—29 ҫулсенче шкулсене тытса тӑма 588 мӗлйун злотых панӑ пулнӑ, 1937—38 ҫулта 438 мӗлйун злотых ҫеҫ панӑ.

Ҫӗршыври массӑсем пӗрмайах кӑмӑлсӑрланса пыраҫҫӗ.

Пољшӑн фашисла «пуҫлӑхӗсем» ҫӗршыв тулашӗнче ҫӗнӗ авант̆урасем туса шалти хирӗҫӳлӗхсенчен тухма май шыраҫҫӗ. Берлинри «фӳрерсем» хӑйсен Варшавӑри ученикӗсене тӑрӑшса хушса тӑраҫҫӗ, вӗсен „паттӑр вӑйне“ сӳнме памасӑр тытса тӑраҫҫӗ. Гитлӗр панӑ сигнал тӑрӑх, Пољшӑри фашисла комитсем хӑйсен кирек хӑш кӳрши ҫине тапӑнма та хатӗр.

Хӑйӗн „пуҫлӑхӗсем“ Гитлӗр умӗнче чӗркуҫланса йӑланнине Пољшӑ халӑхӗ йӗрӗнсе сӑнаса тӑрат̆. Влаҫа тытса тӑракан ушкӑнсем Чехословаки тӗлӗшпе намӑссӑр политикӑ тытни халӑх массисене ҫиллентерсе тӑрӑхтарат̆.

Германи фашисӗсем хӑйсем пуҫ пулса тӑмала „Вӑтаҫӗр Йевропӑ“ тума, Совет Союзӗ ҫине тапӑнма плацдарм хатӗрлеҫҫӗ. Пољшӑ империалисӗсем, Пилсудский каласа хӑварнӑ пек, „тӗнчери аслӑ державӑсемпе пӗр тан вӑйлӑ“ Пољшӑ туса хума шухӑшлаҫҫӗ. Вӗсен ӗмӗчӗ — XVI-XVII-мӗш ӗмӗрсенчи „Йагеллоновски Пољшӑ“ (Йагеллоновски династи вӑхӑтӗнчи Пољшӑпа Литва государстви). „Балти тинӗсӗ патӗнчен Хура тинӗс патне ҫити сарӑлса выртакан“ Пољшӑ тӑвасси ҫинчен ӗмӗтленеҫҫӗ. Ҫак плана вӗсем Совет Союзӗ ҫине тапӑнассипе ҫыхӑнтараҫҫӗ.

1934 ҫулта килӗшӳ туса, Варшавӑри авант̆уриссем хӑйсен кунҫулне Берлинри авант̆уриссемпе ҫыхӑнтарчӗҫ. Анчах Гитлӗр хӑйӗн „тусне“ ҫӑтса йама шухӑнлани халех курӑнат̆ ӗнтӗ.

Версаљри догӑвӑр тӑрӑх (хаљ вӑл догӑвӑра Гитлӗр таткаласа ҫурат̆) нумай территорисем: Тури Силези, Познаљ войеводстви, Помор войеводстви Данциг „коридорӗпе“ пӗрле Пољшӑ аллине куҫнӑ. Ҫак территорисем економикӑра мӗнле пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине ҫакӑнтан та курма пулат̆: Тури Силези Пољшӑна ҫӗршыври пӗтӗм ҫӗркӑмрӑк промышлӗннӑҫӗн 75 процентне, хурҫӑн 65 процентне, цинкпа хура тӑхланӑн 100 процентне, кӳкӗрт кислотин 85 процентне, 60 процента йахӑн азот, 50 процента йахӑн електроенерги парса тӑрат̆. Пољшӑн ҫар промышлӗннӑҫӗ те — пуринчен ытла Тури Силезире.

Литвапа Чехословаки шутӗнчен тата ытти пӗчӗк ҫӗршывсен шутӗнчен татӑк-кӗсӗксем парса, Гитлӗр Пољшӑна Германи фашисӑмӗ кӳрекен хӑрушлӑх ҫинчен мантарса тӑрасшӑн. Германипе ҫывӑхланнӑ хыҫҫӑн мӗнле лару-тӑру пулса тӑнине Пољшӑри нумай политиксем ҫителӗклех уҫҫӑн кураҫҫӗ. Анчах Пољшӑри влаҫа тытса тӑракан ҫынсен ушкӑнӗсем хӑйсен ҫӗршывӗн интересӗсене малала татах сутма та хатӗр, вӗсемшӗн пулсан Пољшӑ буржуазийӗ рабочисемпе хресченсене ҫаратса пухнӑ пурлӑх ҫеҫ аҥ ҫухалтӑр.

Пољшӑ халӑхӗ Германи майлӑ тытса пыракан фашисла политикӑна хирӗҫ тӑрат̆. Нумайах пулмаст̆ „Стронництво људове“ йатлӑ хресчен партин сйесӗ пулса иртнӗ, ҫак сйесра Пољшӑ правитӗлствин тулти политикине, уйрӑмӑнах Чехословаки тӗлӗшпе тытса пыракан политикӑна, хыттӑн сивлесе критикленӗ. Оратӑрсем: Пољшӑн Чехословакине тата ытти пӗчӗк халӑхсене хӳтлекенсен ретӗнче пулмала, ҫапла туни Пољшӑна хӑйнех кирлӗ, тенӗ.

Пољшӑшӑн хӑйшӗн Германи фашисӑмӗ йенчен хӑрушлӑх ӳснине йулашки вӑхӑтра Пољшӑри буржуалӑ хаҫатсем те ӑнланма пуҫланӑ. Сӑмахран, Варшавӑра тухакан „Дзенник народовы“ хаҫат Чехословакине пайласа уйӑрнӑ хыҫҫӑн пулса тӑнӑ лару-тӑрура „Пољшӑшӑн та, унӑн интересӗсемшӗн те нимӗн лайӑххи те ҫук“, — тесе ҫырат̆.

Пољшӑ Чехословаки тӗлӗшпе захватникле намӑссӑр политикӑ тытни, Пољшӑн йут ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Бек „мирлӗ тӗллевсемпе“ ҫӳренин чӑн шухӑшне пӗчӗк ҫӗршывсем умӗнче уҫса пачӗ, Бек пӗчӗк ҫӗршывсен „нейтралитет“ тытакан блокне тӑма хӑтланнин чӑн шухӑшӗ мӗнлине уҫса пачӗ. Берлинран хӗтӗртсе тӑнӑ тӑрӑх, Пољшӑ ҫак блокпа мирлӗ пурнӑҫшӑн тӑрӑшакансене хирӗҫ агрессин тӑвас ӗҫре уҫӑ курма шанса тӑнӑ.

Германи тата Англипе Францири унпа пӗр шухӑшлӑ ҫынсем хӗснипе Чехословаки Пољшӑ уљтиматумне йышӑннӑ хыҫҫӑн, „Ческе слово“ хаҫат ҫапла ҫырнӑ: „...Вӑхӑт ҫитӗ, Пољшӑн ҫавӑн пек испытани йӑвӑрлӑхне хӑйӗн ӗнсипе туйса пӑхмала пулӗ“. Гитлӗр Версаљ догӑвӑрӗн тепӗр страницине — „Германипе Пољшӑ чиккине“ таткаласа ҫурса пӑрахсан, Пољшӑри мӗскӗн-политиксем ҫак сӑмахсене аса илӗҫ.

Пољшӑна хирӗҫле вӑрттӑн кӑларакан брошӳрӑсем, журналсемпе листовкӑсем Пољшӑра пурӑнакан нимӗҫсем хушшинче халех те нумай сарӑлнӑ. Ҫак пӗтӗм гитлӗрла „литературӑра“ ҫакна кӑтартса панӑ: Судет-нимӗҫ ыйтуне „татса панӑ“ хыҫҫӑн тумали ӗҫ — Пољшӑри нимӗҫсем пурӑнакан территорисене Германи ҫумне пӗрлештерес ыйту пулат̆, тенӗ. Ҫент̆абӗр уйӑхӗнче „Пољшӑри нимӗҫ организацисен пӗрлешӗвӗн“ конгресӗ пулса иртнӗ. Ҫак гитлӗрла „пӗрлешӳн“ руководитӗлӗ Сварт Пољшӑна хирӗҫ йунаса сӑмах тухса каланӑ.

Пољшӑри гитлерӗвӗцсем час-часах Пољшӑри хуласен урамӗсенӗ фашисла формӑпа тумланса тухаҫҫӗ, провокацисем туса Пољшӑри рабочисемпе тытӑҫусем пуҫла-пуҫла йараҫҫӗ. Ҫавнашкал тытӑҫу нумайах пулмаст̆ Лодзре пулса иртнӗ.

Штуббӗр помешчик йертсе пыракан гитлӗровӗцсен ушкӑнӗ (хаљ вӑл ушкӑна суда панӑ) гитлӗрла ҫамрӑксене пӗрмайах Пољшӑран Германийе вӑрттӑн куҫарса тӑнӑ. Ҫав ҫамрӑксене Германире йатарласах ҫар курсӗсенче вӗренте-вӗренте кӑларнӑ, кайран вара „Пољшӑ легионӗ“ текен ушкӑна кӗртнӗ; ӑна „Австри легионӗ“ пек, „Судет-нимӗҫ легионӗ“ пек, Пољшӑри нимӗҫсем пурӑнакан территорисене тӳртса илессишӗн кӗрешес ӗҫре усӑ курма тунӑ. Волыљри нимӗҫсем Белосток хулине пухӑнаҫҫӗ, унтан вӗсене Хӗвелтухӑҫ Пруссине ӑсатаҫҫӗ те унта вара йатарласах уҫнӑ фашисла курссенче вӗрентсе кӑлараҫҫӗ.

Ҫакӑн пек обстановкӑра ӗнтӗ Гитлӗрӑн ҫӗнӗ авант̆урӑсем тумали срукӗсем Пољшӑн хаљхи вӑхӑтри пуҫлӑхӗсем кӗтнинчен чылай маларах килсе ҫитме пултараҫҫӗ.

Йулашки вӑхӑтра тӗнче пичечӗ Варшавӑпа Берлин хушшинчи хутшӑнусем сивӗнни ҫинчен ҫырат̆. Германи тапӑнмали ҫӗршывсенчен пӗри Пољшӑ пулса тӑрат̆, тесе паллӑ тӑват̆. Ку ӗнтӗ ӑнсӑртран пулса пыракан йапала мар. Йут ҫӗршывсенчи хаҫатсем: Пољшӑ хаљ ӗнтӗ Муссолинипе блок тӑвасшӑн тӑрӑшат̆, тесе ҫыраҫҫӗ, Гитлӗр пуҫ пулса тӑрасран сыхланни Муссолинишӗн те ытлашши мар. Вӑл блока Венгрийе, Румынийе тата, тен, Йугославийе те кӗртме шухӑшлаҫҫӗ. Ҫак ушкӑнӑн Совет Союзне хирӗҫле сӑннине хӑйраҫҫӗ.

Ҫаксем пурте ӗнтӗ ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: Пољшӑ магначӗсем хӑйсен шалти тата тулти политикинче тӑлланса ларнӑ. Правитӗлствӑ массӑсем хушшинче авторитетлӑ пулманни ӑна малала татах репрессисем тума тӗкет.

Чуралӑхпа чухӑнлӑх политикине хирӗҫ, Гитлӗрпа Муссолинине кӑмӑл туса пырас шутлӑ политикӑна хирӗҫ, пуҫланма ӗлкӗрнӗ тӗнче вӑрҫине татах анлатса йамали политикӑна хирӗҫ халӑх массисем хӑватлӑн протестленине нимӗнле варвӑрла тискер ӗҫсем те тытса чарма пултарас ҫук.

Государствă дохочĕсен планне тултарассишĕн

Чăваш республикĕк 132 мĕлйун тенкĕлĕ бўджетĕнче государствă дохочĕсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Государствă дохочĕсен планĕ 1938 çулта 173 мĕлйун та 50 пин тенкĕ шутланат̌. Вăл шутран 78 мĕлйун та 630 пин тенкĕ, йе 59,5 процент Чăваш АССР бўджетне кĕрет.

Хуçалăх организацисем, промышлĕннăç предприйатисем, суту-илў организацисем производствăпа финанс тата таварçаврăнăш планĕсене ăнăçлăн тултарсан çеç 173 мĕлйун та 50 пин тенкĕлĕ плана вăхăтра тултарма пулат̌. Государствă дохочĕсен планне (оборот йенĕпе хуракан налог, бўджет ваљљи хуни т. ыт. те) республикĕн пĕтĕм халăх хуçалăх планне промышлĕннăç тата суту-илў йенĕпе тултарсан çеç пурнăçлама пулат̌.

Малтанхи виçĕ квартăлти тата тăваттăмĕш квартăлти уйăх та 10 кун хушшинчи ĕçсем промышлĕннăçпа суту-илўри чылай отраçĕлсем çителĕксĕр ĕçленине кăтартса пачĕç.

Тăваттăмĕш квартăлти план 53.030 пин тенкĕ. Нойаберĕн 10-мĕшне илсен 21.767,1 тенкĕ пухса плана 41 процент анчах тултарнă. Тăватă вунăкунлăхра 1.831,2 пин тенкĕ пухăнаймасăр йулчĕ.

Ĕç çакăн пек начар пыни халăх хуçалăх планĕ тăрăх социаллă-кулљтурăлă пысăк ĕçсене ваљљи укçа-тенкĕ парса тăрассинę йăвăрлатрĕ.

Мĕнле организацисем плана тултарма кансĕрлесе тăраççĕ-ха?

Малтанхи çурçуллăхра тата халĕ те çăкăрпа суту-илў тăвас ĕçе çителĕксĕр организацилеҥĕ. „Заготзерно“, Мельтрест тата суту-илў организацисем ПСК(б)П Обкомĕпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çăнăх кўрсе килес тата суту-илў ĕçне лайăх йĕркелес тĕлĕшпе йышăннă решенисене пурнăçламаççĕ. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсовет 1938 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановлени те çителĕксĕр пурнăçланса пырат̌. Ку постановлени тăрăх суту-илў организацисен склачĕсемпе çăкăр пекарнисене нумай тĕрлĕ сурт çăнăх запасĕ 10 кунлăх, „Заготзерно“ бази мĕн таран инçетрине кура хăшпĕр районсенче 15—25 кунлăх тĕрлĕ суртлă çăнăхсем запас тăма кирлĕ.

Çĕмĕрлепе Канашра пысăк предприйатисем пур, унта рабочисем нумай. Анчах та кунта „Заготзерно“ базисем запас мар, хăшпĕр чухне кирлĕ чухлĕ те çăнăх тытса тăраймаççĕ.

Нойаберĕн 1-мĕшне илсен „Заготзернон“ Улатăрти базинче 87 тата 65 процентлă çăнăхсем пачах та пулман. Канашри базăра 95 процентли 9 тоннă анчах пулнă, 87 тата 65 процентлă çăнăхсем пулман. Çĕмĕрлери базăра та кирлĕ суртлă çăнăхсем час-часах пулмаççĕ.

Канашри базă çумне 10 район, Çĕмĕрлери базă çумне 5 район çирĕплетнĕ. Çăнăхсене çавăн пек сахал тытса тăрсан вăл районсенче çăкăр суту-илĕвне нийепле те кирлĕ пек йĕркелеме çук.

Канашра, Çĕмĕрлере тата ытти хăшпĕр хуласенче çăкăр çителĕклĕ пулманни час-часах сисĕнет. Хăшпĕр суту-илў организацисем çăнăх пур çинчех кирлĕ чухлĕ çăкăр пĕçерме тăрăшмаççĕ.

Кун пек йапăх ĕçленине пĕтерес пулат̌. Пур хуласенче те, район центрĕсенче те пур тĕрлĕ суртлă çăкăрсемпе те суту-илў тăвас пулат̌.

Нефт̌ продуктисем йенĕпе те план тулса пымаст̌. 4-мĕш квартăлта нефт̌ йенĕпе оборот налогне 4.500 пин тенкĕ йышăннă. Нойаберĕн 10-мĕшне илсен плана 40 процент анчах тултарнă. Нефт̌ продукцине чи нумай илсе тăракан МТ Станцисем октябĕр уйăхĕнчи фондран 736,1 тоннă илсе (1410 тоннă вырăнне) плана 52,2 процент анчах тултарчĕç.

Шупашкарти ерех савăчĕ çителĕклĕ ĕçлеменнине пула та 553,3 пин тенкĕ пухăнаймасăр йулнă.

Главтабак бази йенĕпе 523,6 пин тенкĕ пухăнмасăр йулчĕ. Шупашкара тата ытти районсене кирлĕ чухлĕ махоркă тата пируссем кўрсе тăраймаççĕ.

Йетĕрнери çу савăчĕ йенĕпе 374,5 пин тенкĕ пухăнмасăр йулчĕ. Крахмал савăчĕсем йенĕпе те пухăнса çитейменни нумай шутланат̌. Иелчĕкри крахмал савăтне çак вăхăта çитсе те ремонт туса çитермен. Çавăн пекех Промсойузпа Вăрманпромăн хăшпĕр предприйатисем йенĕпе те план тулса пымаст̌. Çаксем ĕнтĕ государствă дохочĕсен планне тултарма кансĕрлеççĕ.

Районсенчипе хуласенчи финанс оргăнĕсен, государствă дохочĕсен инспекторĕсен çак ответлă участкăра питĕ тимлĕн ĕçлемеле. Предприйатисен ĕçĕсене тĕрĕслемеле. Плана тултарма чăрмантаракансем çинчен районри партипе совет организацисене пĕлтермеле, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтермеле. Анчах та халĕ государствă инспекторĕсенчен Карикăв (Елĕк р.), Уфунăвă (Патăрйел), Петров (Трак), Йакăвлĕв (Çĕмĕрле) тата ыттисем те начар ĕçлеççĕ.

Шупашкар хулинче те государствă дохочĕсен планне тултарасси питĕ йапăх пырат̌.

Халăх комиссариачĕсемпе хуçалăх организацисен руководителĕсем йышăннă плансене тата финанс обйазательствисене тултарассишĕн государствă умĕнче ответлă.

Октябĕр умĕнхи социалисăмла ăмăртури ўсĕмсене ĕçре çирĕплетмеле. Предприйатисенче, суту-илў организацисенче стахановла йухăма сарсах пымала. Финанс йенĕпе отличнă ĕçлемеле.

Государствă дохочĕсен планне сăмахсăрах тултарас пулат̌.

И. Золотников.

Государствăна сўс-кантăр параççĕ

ИШЛЕЙ. Районра малта пыракан колхозсем государствăна сўс-кантăр, кантăр вăрри памали плана тултарчĕç. Карманкаçсипе Лепетер тата Вăрманкас колхозĕсем государствăна сўс тата кантăр вăрри планран ирттерсе панă. Çак колхозсенчи колхозниксем те государствăна çĕрулми парса татнă. Çапах та районра государствăна сўс тата кантăр вăрри тăратасси сўрĕккĕн пырат̌-ха. Районĕпе илсен, сўс-кантăр парас плана 41 процент, кантăр вăрри памали плана 56 процент çеç тултарнă. Ку йенĕпе уйрăмăнах Йанăш, Иарапайкасси, Ваçилкасси, Катраç, Сăпайкасси йалсовечĕсем кайа йулнă.

Гер. Шчербаков.

Дени, Долгорукăв тата Дупчанăв художниксен плакачĕ,—„Искусство“ издательстви кăларнă.

В. Иванов репродукцийĕ (Сойузфото).

Плана срукчен тултарма пулаççĕ

ВĂРНАР. Вăрманпромхозра йалан ĕçлекен бригадăсем IV-мĕш квартăл планне срукчен тултарассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Данилăв йулташăн бригади кашни кунах йăваç турттарас плана 113 процент тултарат̌. IV-мĕш квартăлта татах та ытларах турттарма пулат̌.

Хăмăш колхозĕнчен пынă Кондаков йулташ бригади (бригадăра 5 çын) III-мĕш квартăл планне 182 процент тултарнă. Вăтамăн шутласан халĕ кашни рабочи нормăна 180—200 процент тултарса кунне 35 тенкĕ ĕçлесе илет.

Сретенский, Звенцов тата Константинăв йулташсен бригадисем те йаланах ĕç тухăçлăхне хăпартса пыраççĕ.

Н. Скворцов.

Стахановла ĕçлекенсем

Акшкўлти механизацилĕ вăрман пунктĕнчи стахановĕçсем Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртури лайăх примерсене çирĕплетсе пыраççĕ. Кашни рабочи IV-мĕш квартăл планне пур сортиментсем тăрăх та срукчен тултарассишĕн кĕрешет.

Лучковăй пăчкăпа ĕçлекен Ширманурăв йулташ октябĕр уйăхĕнче касас нормăча 300—350 процент тултарса пынă пулсан, халĕ 337—360 процент тултарат̌. Малйамăв йулташ йертсе пыракан бригадă та кашни кунах икшер нормă, шофĕр Степанăв йулташ 129—140 процент тултараççĕ.

Çитĕннисен вăтам шкулĕ

Трак районĕнчи çутĕç пайĕ Тракри вăтам шкул çумĕнче октяберĕн малтанхи кунĕсенчех çитĕннисене вĕренмелли вăтам шкулăн VIII-мĕш класне уçрĕ. Шкулта пурĕ 31 çын вĕренет. Анчах шкул дирекцийĕ, пайанхи куна çитсе те вĕренекенсене кирлĕ таран условисем туса паман. Çитĕннисен шкулĕнче уроксем каçхине ирттереççĕ. Çавăнпа та вĕсене çутă кирлĕ. Анчах та кунта пĕр пĕчĕк лампăсăр пуçне урăх нимĕн те çук. Çырмали хутсене те ытти классенчи пек çителĕклĕ таран памаççĕ. Ытти классенче уроксем хыççăн политинформацисем ирттереççĕ. Çитĕннисен шкулĕнче нимĕнле политинформаци те çук. Кунта вĕренекенсене библиотекăран кĕнекесем памаççĕ, нимĕнле кружоксене те хутшăнтармаççĕ.

Шкул директорĕ Томасăв çитĕннисен шкулĕ çинчен ним те шутламаст̌ пулас. Вăл кунта вĕренекенсемпе калаçу та ирттермен. Чылай вĕренекенсем директăра палламаççĕ те. Çавăн пекех вĕренў пайĕн пуçлăхĕ Йеремейĕвă та вĕренекенсемпе калаçмаст̌.

Епĕр директăртан пире вĕренме условисем туса пама ыйтатпăр.

Вĕренекен.

Пысăк клуб тунă

Кивĕ Вăрмар йалĕнче (Вăрмар районĕ) нумай пулмаст̌ çĕнĕ пысăк клуб уçнă. Вăл клуба 250 çын вырнаçат̌.

Октябĕр уйавĕ кунĕсенче çĕнĕ клуб çуртĕнче чаплă вечăр пулнă, „На дальнем востоке“ кинофилљм кăтартнă. Нойаберĕн 8-мĕшĕнче туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем „Тăван çĕршывшăн“ йатлă пйесă лартса панă.

Д. Александрăв.

Вĕренўре усă куратпăр

Епĕр, Шăхасанти вăтăм шкулта вĕренекенсем, нимĕç чĕлхине ытти предметсемпе танах тăрăшса вĕренетпĕр. Нимĕç чĕлхине вĕрентекен Н. В. Ваçилйĕв хăйĕн предметне ачасене лайăх вĕрентес тесе Мускавран нимĕç чĕлхипе калакан патефон пластинкисем илсе килчĕ. Вăл пластинкăсемпе епĕр кашни ернере пĕр занљати туса ирттеретпĕр.

Й. Силивестрăв.

Трактăриссен курсĕсем

Çĕрпў МТС-нче трактăриссен курсĕ ĕçлеме тытăнат̌. Курсра тăватă уйăх вĕренмеле. Вăрнар машинă-трактăрлă станцинче те çавăн пек курс уçăлат̌. Трак МТС-чи трактăриссен курсĕнче пурĕ 80 колхозник вĕренмеле.

Редакцине килнĕ çырусем

Барсăв пирки кино кураймастпăр

(Служăшчи çырăвĕ)

Патăрйелĕнчи кинобазăри механик пулса ĕçлекен Барсăв хăйĕн ĕçĕшĕн нимĕнле ответлăх та туймаст̌. Кино кăтартмала чухне вăл йаланах тенĕ пек будкăна ўсĕр пуçпа пырат̌. Паллах, ўсĕр механик кино аппаратне мĕнле-ха лайăх ĕçлеттерме пултартăр? Çавăн пирки вара кино курма пухăннă халăх йе картинăн хăшпĕр сыпăкĕсене курмасăр йе пĕтĕмĕшпех те кураймасăр кайала тухса утат̌. Нумай пулмаст̌ ак „Год 19-й“ йатлă саслă картинă кăтартатпăр тесе пĕлтерў пачĕç. Халăх нумай пухăнчĕ. Картинă пуçланчĕ. Анчах... саслă мар. Тата вĕçне çити те кăтартмарĕç. Нойаберĕн 12-мĕшĕнче те çавнашкалах пулчĕ. Билетсене сутса пĕтерчĕç. Барсăв ўсĕр пирки кино кăтартмарĕç. Билетшăн илнĕ укçасене те кайала тавăрса памарĕç.

Пирĕн пĕлес килет: хăçан пиртен кулма пăрахĕ-ши çак Барсăв? Кинобазăн пуçлăхĕ Йашуткин тата хăçанччен çак ўсĕр çынна механик туса усрĕ-ши?

Ник. Квасăв.

Хăçан пулат̌-ши?

Иртнĕ çулта Тĕрлемесри „Коммунар“ колхоз членĕсем (Куславкка р.) хăйсен килĕсене електричĕствă кĕртме тытăннăччĕ. Ку тĕлĕшпе Куславккаран пуçласа Тĕрлемес урамĕсене çитийех йупасем лартса тухрĕç. Иупасем çумне изољатăрсене те вырнаçтарчĕç. Колхозниксем йăла електричĕствăпа çутатма тытăннишĕн хĕпĕртерĕç. Тинех ĕнтĕ тахçантанпа кĕтнĕ ĕмĕт çитет, терĕç. Анчах йулашкинчен темĕн сăлтавпа çак пысăк ĕçе пурнăçлама чарса лартрĕç. Унтанпа çулталăк çура çитрĕ. Халĕ те çак тытăннă ĕçе вĕçлесе çитерес тесе никам та нимĕн те тумаст̌. Колхозниксем ку тĕлĕшпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи селелектрона та çитнĕ. Анчах унта та нимĕн те тумарĕç.

Епĕр, колхозниксем, хамăр килсене електричĕствă кĕртесшĕн. Анчах ку ĕç хăçан пулат̌-ши?

Колхозник И. Д. Харитонăв.

Вулав çурчĕ пĕрмайах хупă

Епĕ Чакаç (Канаш районĕ) шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренетĕп. Манăн ĕмĕт—кăçал пуçламĕш шкултан отличнă вĕренсе тухасси. Çавăнпа та епĕр, шкул ачисем, тĕрлĕрен кĕнекесем вуласа хамăр пĕлĕве хăпартма тăрăшатпăр.

Анчах пирĕн шкул библиотекинче пире кирлĕ кĕнекесем çителĕклĕ мар. Йалта вулав çурчĕ пур. Унăн пуçлăхĕ И. Михайлăв вулав çуртне йаланах хупă тăратат̌.

Вулав çурчĕн ĕçне чĕртсе йама май çук-ши?

А. Сидăрăвă.

Малта пыракансенчен вĕренмеле

ЙĔПРЕÇ. Нойаберĕн 13-мĕшне районĕпе 27 колхоз государствăна çĕрулми тăратассине тултарнă. „Çимĕç“, „Путиловка“, „Канаш“, „Смычка“, „Правда“, „Коммунар“ тата Сталин, Крупскайа йачĕсемпе тăракан колхозсем çĕрулми хатĕрлев планне вăхăтра тултарассишĕн хастарлă ĕçлерĕç. Пайанхи куна çĕрулми хатĕрлев планĕсене тултарасси патне çывхарса çитнĕ колхозсем 15 шутланаççĕ. Вĕсен шутне: „Строитель“—99,6 проц., Маркс йачĕпе тăраканни—99,8 проц. „17 партс“езд“—93,3 процент, „Коминтерн“—99,7 процент тултарнă колхозсем кĕреççĕ.

Районра государствă умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра тултармасăр тăракан колхозсем те сахал мар. Вĕсемех çĕрулми хатĕрлев планне тултарас ĕçре те района кайала туртса пыраççĕ. Акă, „Тымар“—13 процент, „XI лет Чувашии“—41 процент, „Орел“—23,3 процент, „Заря“—28,1 процент çеç тултарнă-ха. Кун пек колхозсем районĕпе 10 шутланаççĕ.

Ку колхозсен руководителĕсем государствă интересĕшĕн питĕ сахал кĕрешеççĕ.

Г. Марушĕв.

Çĕрулми хатĕрлевĕ

1938 çулшăн государствăна çĕрулми тăратмали плана мĕнле тултарнине кăтартакан

СВОДКĂ

(Нойаберĕн 20-мĕшне, процентпа)

1. Улатăр	83,7
2. Елĕк	90,4
3. Патăрйел.	43,5
4. Вăрнар	80,3
5. Йĕпреç	64,0
6. Ишлей	62,6
7. Канаш	53,2
8. Куславкка	50,7
9. Кувакинă	47,9
10. Хĕрлĕ Чутай	41,9
11. Сĕнтĕрвăрри	60,9
12. Пăрачкав	59,9
13. Турхан.	58,4
14. Тутаркас	90,5
15. Трак	59,0
16. Вăрмар	38,3
17. Çĕрпў	43,4
18. Шупашкар	75,9
19. Шăмăршă	52,3
20. Шăхасан	76,3
21. Шăнкăртам	80,0
22. Çĕмĕрле	63,8
23. Йетĕрне	63,9
24. Йелчĕк	66,5
25. Тăвай	78,0
Республикĕпе	61,4

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне тултарассишĕн болљшевикла кĕрешер

Йулашки тăватă çул хушшинче Чăваш республикĕнче лашасен хисепĕ 3,65 процент, майракалă шултра выљăхсен хисепĕ 23,5 процент, сурăхсен хисепĕ—23,3 процент, сыснасен хисепĕ—62,4 процент ўснĕ. Колхозсенче халљ 1687 таран выљăх-чĕрлĕх ферми шутланат̌.

Çак çитĕнўсем вĕсем—йалхуçалăхĕнче колхоз стройĕ çĕнтернин, колхозсемпе колхозниксене государствă пысăккăн пулăшнин резуљтачĕсем пулса тăраççĕ.

Пирĕн государствăн выљăх-чĕрлех ĕрчетес ĕçре тата пысăкрах çитĕнўсем тума майсем пулнă, анчах халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсем выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре сахал мар сийенленĕ.

Социалисăмлă ăмăрту анлăн саралса пынипе выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те стахановĕçсен чаплă йухăмĕ пуçланса кайрĕ. Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре стахановла ĕçлекенсем пирĕн республикăра та вуншарăн, çĕршерĕн шутланаççĕ. Çĕрпў районĕнчи „Ĕмĕт“ колхозри дойаркă Иефимăвă, „Богатырь“ колхозри сысна ферми пуçлăхĕн Йевлокимăв йулташсен йачĕсене пĕтĕм Чăваш республикĕпех пĕлсе тăраççĕ. Иртнĕ суйлаври вĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйларĕç.

Чăваш республикĕ выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана, майракалă шултра выљăхсемсĕр пуçне, ăнăçлăн пурнăça кĕртсе пырат̌. Октябĕр 1-мĕшне шута илнĕ тăрăх, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне лашасем тăрăх—105 процент, ĕнесем тăрăх—94,8 процент, сыснасем тăрăх—118,83 процент, сурăхсем тăрăх—105,28 процент тултарнă. 1937 çулпа танлаштарсан, пирĕн республикăра лашасен хисепĕ 11,1 процент, ĕнесен—7,5 процент, сыснасен—25,5 процент, сурăхсен—28,2 процент ўснĕ. Уйрăм районсем тăрăх илсен, Ишлей районĕнче лашасен хисепĕ—21 процент, Кувакинă районĕнче 18,1 процент йахăн ўснĕ. Канаш, Шăнкăртам, Тăвай районĕсенче те лашасен хисепĕ—15 процент ытларах ўснĕ. Трак, Иетĕрне, Шăхасан, Вăрмар, Шупашкар районĕсем лашасен шутне ўстерес тĕлĕшпе кайарах йулса пыраççĕ. Ку районсенче лашасен хисепĕ 7—8 процента йахăн çеç хушăннă.

Майракалă шултра выљăхсен хисепĕ йенĕпе Ишлей (22 процент), Турхан (23,9 процент), Шупашкар (28,46 процент) районĕсем малта пыраççĕ. Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Шăхасан тата Канаш районĕсенче сăвакан ĕнесен хисепĕ 26 процентран пуçласа 34 процент таран хушăннă.

Хăшпĕр районсенче сыснасен шучĕ питĕ хăвăрт ўссе пырат̌. Акă, Йетĕрне, Шупашкар, Шăхасан, Çĕмĕрле районĕнче сыснасен хисепĕ пĕлтĕрхипе танлаштарсан 40—50 процент таран ўснĕ.

Сурăхсен хисепĕ те Турхан, Шăмăршă, Улатăр, Пăрачкав районсенче—45 процент таран хăпарнă.

Çав хушăрах государствă планне тултарайман районсем те сахал мар. Пăрачкав районĕ плана 99,9 процент, Шупашкар районĕ—98,5 процент çеç тултарнă.

Майракалă шултра выљăх-чĕрлĕх планне 22 район тултарайман. Елĕк, Вăрнар, Çĕрпў, Сĕнтĕрвăрри, Иĕпреç, Ишлей тата Шăнкăртам районĕсенче ĕнесен хисепĕ пĕлтĕрхинчен те чакнă.

Çамрăк выљăхсене пăхса ўстересси выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне тултарас çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăрат̌. Анчах, ку пысăк ĕçе хăшпĕр колхозсенче ку таранччен тивĕçлипе хаклама вĕренеймен-ха. Пăрусене пăхса ўстерес плана Чăваш республикĕ—92,6 процент çеç тултарнă. Акă, Йелчĕк районĕнче кăçал çуралнă ţыхасенчен 10,3 проц., пăрусенчен 14,7 процент, путексенчен 22 процент, сысна çурисенчен 18,6 процент ытла вилсе пĕтнĕ. Шупашкар, Вăрнар, Ишлей, Çĕрпў, Елĕк районĕсем те çамрăк выљăхсене пăхса ўстерес тĕлĕшпе чи кайри вырăнта тăраççĕ.

Çăм, сĕт-çу, аш-какай ытларах пултăр тесен, выљăхсен ăратлăхне лайăхлатасси çине ытларах пăхмала. Йулашки çулсенче пирĕн республикăри выљăх-чĕрлĕхсен ăратлăхне лайăхлатас йенĕпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Халљхи вăхăтра кашни колхозра тенĕ пекех ăратлă выљăхсем пур.

Иртнĕ çур çул хушшинче колхозсенче ĕнесене 88,5 процент таран ăратлă вăкăрсемпе, сурăхсене 96,6 процент, сыснасене 94 процент таран ăратлă аçасемпе чуптарса хăварнă.

Пире партипе правительствă выљăхсен ăратлăхне метизаци урлă лайăхлатса пыма, çавна май выљăхсен продуктивлăхне ўстерме хушаççĕ. Анчах хăшпĕр колхозсенче ăратлă аçа выљăхсем пур çĕртенех вĕсемпе усă курмасăр, вырăнти ăратсăр аçасемпе чуптараççĕ. Тĕслĕхрен, Канаш районĕнчи „Мотор“ колхозра кăçал 15 ăратлă така витерех тăрса çу каçнă. Колхозниксен сурăхĕсем пурте вырăнти вĕтĕ, шултра çăмлă такасемпе чупса йулнă. Çака вăл выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре сăтăрлă ĕç тунипе пĕрлех, шутланат̌.

Йулашки виç-тăват çул хушшинче колхозниксен хушшинчи ĕнесĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе те сахал мар çитĕнўсем тунă. 1934 çулпа 1938 çул хушшинче колхозсенчи выљăх-чĕрлĕх фермисенчен 5 пин çура ытла пăру, 17 пин ытла сысна çури сутнă. Кунсăр пуçне, контрактаци йĕркипе колхозниксене 26 пин ытла пăру туйантарнă. Халљхи вăхăтра ĕнесĕрлĕхе пĕтернĕ колхозсем те сахал мар. Акă, Йелчĕк районĕнчи Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз кăçал 19 колхознике ĕне выљăх туйантарнă. Çак районри „Вперед“ колхозра та ĕнесĕр колхозниксем çук. Пăрачкав районĕнчи Горький йачĕпе тăракан колхоз хăйĕн членĕсемшĕн çине тăрсах тăрăшат̌. Ĕнесĕр колхозниксене пама фермăри выљăхсенчен 10 пăру, пĕр ĕне уйăрнă. Кун пек колхозсем çĕршерĕн шутланаççĕ. Çакăнпа пĕрлех ĕнесĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе партипе правительствă йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пырайман колхозсем те пур. Ĕнесĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе уйрăмăнах Патăрйел, Йелчĕк, Турхан, Елĕк районĕсем питĕ начар ĕçлеççĕ. Патăрйел районĕнче кăçал пурĕ те 28 хуçалăха пăру илсе панă. Ку ĕнтĕ планна танлаштарсан мĕн пурĕ те 8 процент çеç пулат̌. Елĕк районĕнче ĕнесĕр колхозниксен хисепĕ 1000-рен те иртет. Октяберĕн 1-мĕш тĕлне вĕсенчен 66 хуçалăха çеç ĕне йе пăру илсе панă.

Çак районсенче колхозниксем хушшинче ĕнесĕрлĕхе пĕтерессин çине çийелтен пăхни, ку ĕçе хăй йуххипе йани аванах курăнса тăрат̌. Тўрех калас пулат̌, Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те ку ĕçре çителĕклĕ йертсе пыман. Ĕнесĕр колхозниксене ĕне йе пăру туйантарас тĕлĕшпе куллен пикенсе ĕçлес вырăнне, вăхăта пысăк резољуцисем йышăннипех ирттерсе йанă.

Колхозниксене ĕне йе пăру илсе памашкăн колхозсем ваљљи государствă 300 пин тенкĕ укçа кивçен панă. Анчах çак укçан çуррипе çеç усă курнă. Елĕк районĕ 12 пин тенкĕрен 4 пин тенкипе çеç усă курнă.

ПСК(б)П Чăваш облаç организацин XIX-ш конференцийĕ çĕрĕç оргăнĕсене тивĕçлипе критиклесе „уйрăмах колхозниксем хушшинчи ĕнесĕрлĕхе пĕтерессин çине пăхмала“, тесе хушса хăварчĕ.

Пур районсенче те ĕнесĕр колхозниксене тĕплĕрех шута илсе тата государствă кивçен панă укçапа мĕнле усă курнине тĕрĕслесе, кĕске вăхăтрах ĕнесĕр колхозниксене ĕне йе пăру туйантарма тăрăшмала.

Партин облаçри XIX-мĕш конференцийĕ „ăратлă выљăх-чĕрлĕх ыйтăвне татса парас ĕçе болљшевикла тытăнма хушат̌, выљăхсен усăлă продуктивлăхне татăклăн хăпартмала, выљăхсене пăхас ĕçе лайăхлатмала, вĕсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе халех кирлĕ пек ĕç туса ирттермеле“, тесе йышăннине пурнăçа кĕртесшĕн пур вăйа хурса ĕçлемеле.

А. Федотăв.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн выљăх-чĕрлĕх управленин началљникĕ.

Францири ĕç конфедерацийĕн сйесĕ хупăннă

Франциври ĕç конфедерацийĕн сйесĕ хăйĕн ĕçĕсене туса пĕтерне. Франциври профсойузсен сйесĕ ытларахĕш сасăпа вăрçа хирĕçлесе йышăннă резољуцире: фашисăм наступленийĕ вăйланса пынă май, вăрçа хăрушлăхĕ те ӳссе пынине палла тунă. Резољуци агрессăрсене сивлет, пĕтĕм халăхсене пĕрлешме, коллективлă хăрушăсăрлăх тата пĕр-пĕрне пулăшнă никĕс çинче хĕçпăшала пăрахма чĕнет. Резољуци политикăлă ыйтусемпе економикăлă ыйтусем çинчен сӳтсе-йавма халех пĕтĕм тĕнчери конференци пухма кирли çинчен калать. Çак ыйтусене татса хунинчен мирлĕ пурнăç килет, тенĕ резољуцире.

Çакăнпа пĕрлех сйес пĕтĕм тĕнчери профсойузсен конференцине пухма кирли çинчен калать. Çак конференцин миршĕн кĕрешме рабочи класăн вăйĕсене пĕрлештермеле. Пĕтĕм тĕнчери конференцине пухас ыйту тăрăх тунă килĕшӳ пĕтĕм тĕнчери профсойузсен пĕрлĕхне тумали тĕп выран пулмала.

* * *

Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче Нант хулинче ĕç конфедерацийĕн националњнăй комитечĕн ларăвĕ пулнă. Çак ларура ĕç конфедерацийĕн бӳровне çĕнĕрен суйланă. Унта çак çынсем кĕреççĕ. Леон Жуо—генераљнăй çекретар, çекретар заместителĕсем: Буиссон, Фрашон, Ракамон, Ботеро, Белен, Буйе тата казначей Дӳпон.

Кун хыççăн ĕç федерацин административлă комиççине 45 члентан суйланă. Комиççи членĕсене вăрттăн сасăласа суйланă, унта камсем кĕни паллă мар-ха.

Националњнăй комитет çавăн пекех тата халљ анчах сйесра йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес ыйтăва пăхса тухнă. Вăл ыйтусенчен пĕри—чрезвычайнăй декретсене протеслеме нойабĕрĕн 26-мĕшĕнче националњнăй кун иртерме палăртса хунă ĕçе организацилесси çинчен пулнă.

(ТАСС).

Будапештри рабочисем Венгрири гитлеровĕцсене отпор параççĕ

Гитлерăн Венгрири бандичĕсем йулашки кунсенче Будапештра тата ытти хуласенче рабочисен кварталĕсем çине тапăнма пуçланă.

Çакă вăл рабочисене тарăхтарать. Будапештра чылай район ĕнче рабочисем хăйсене хӳтлеме дружинăсем тунă. Çак дружинăсем фашисла бандăсене рабочисен кварталĕсене кĕртмеççĕ.

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Будапештри пысăк предприйатисемпе типографисенче гитлеровĕцсен иртĕнчĕк ĕçĕсене протеслесе çур сехетлĕхе забастовкăсем пулса иртнĕ. Çав кунхинех суту-илӳ ĕçĕнчи служăщисен, строителсен, текстиљщиксен тата ытти рабочисен пухăвĕсем пулса иртнĕ. Пухусем правителства умне гитлеровĕцсен провокацилĕ ĕçĕсене пĕтерсе лартма ыйту тăратнă.

(ТАСС).

Йугославире вилекенсен шучĕ ӳссе пыни

Йугослави пичечĕ Йугославире вилекенсемпе çуралакансен хисепĕ мĕнле пулни çинчен каласа парать. Вилекенсен процентĕ йенĕпе Йугослави Йевропăра иккĕмĕш вырăнта тăрать. Пуринчен ытла туберкуљоз чирĕпе вилеççĕ, вăл чир йалсенче хытă саралнă. Пĕтĕм ачасенчен 15 процентĕ вилсе пырать.

Çав вăхăтрах халăха медицинăлă пулăшу парасси пит начар пулса пырать. Пĕтĕм çĕршывĕпе те 5.700 врач кăна, вĕсенчен 900 врачĕ çеç йалта ĕçлеççĕ. Йалхуçалăхлĕ тĕп районсенче 150.000 çын пуçне пĕр врач, 68 пин çын пуçне пĕр аптекă тивет. Йугославири пуљницăсенче пурĕ 27 пин койкă шутланать. 15.000 çын пуçне пĕр койкă тивет. Пит кайа йулнă районсенче ĕçсем тата начартарах. Çапла, Приморск районĕнче 108.000 çын пуçне пĕр пуљницă кăна.

(ТАСС).

Германин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи шпионла центрĕн процесĕ

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Германин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи шпионла центрĕн процесĕнче çаплах айăпланакан Фосса допрос тунă. Фосс хăй айăплă мар пек кăтартма тăрăшнă. Анчах прокурор ыйтăвĕсене ответленĕ чухне унăн ирĕксĕрех, вăл хăй 1937 çулта Германире пулнă чухне, Бременри тинĕс разведкин начаљникĕпе—Пфейферпа курнăçни çинчен йышăнмала пулнă. Фосс шпиона допрос туса пĕтернĕ хыççăн, Фосс арăмĕнчен ыйтнă (свидетелница). Вăл упăшкине тӳрре кăларма тăрăшнă. Анчах та, прокурор ыйтнисене ответленĕ чухне, унăн Фосс Бременри тинĕс разведки начаљникĕнчен—Пфейфертан çыру илнине йышăнмала пулнă.

(ТАСС).

Çичĕ хут ӳснĕ

Туркменире Байрам-Али районĕнчи колхозсенче йулашки виçĕ çул хушшинче вак выљăхсен хисепĕ çичĕ хут ӳснĕ. 1935 çулта районра сурăх фермисем пурĕ те 10 кăна пулнă. Халĕ сурăх фермисем 46, вĕсенче 50.000 пуç ытла сурăх. (ТАСС).

Чаплă çĕнтерӳ

Совет Сойузĕнчи шывçул транспăрт работникĕсем турттару планна тултарас кĕрешӳре чаплă çĕнтерӳ турĕç. Нойабĕрĕн 19-мĕшĕ тĕлне вĕсем 9.962,5 пин тоннă груз турттарнă, октябĕр—нойабĕр планне 100,2 процент тултарнă.

(ТАСС).

Кийĕври киностудире „Щорс" йатлă кинокартина ӳкерессĕ.
Ӳкерчĕк çинче: Фильмри кадр. Щорс штабра, телефон тăрăх калаçать.

Вульф фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Йеврейсене хирĕç çĕнĕ саккунсем кăлараççĕ

Фашисла Германи хаçачĕсем çитес çывăх вăхăтра йеврейсене хирĕç çĕнĕ саккунсем кăларасси çинчен çыраççĕ. Çавăн пек „саккунсенчен" пĕри—йеврей çыннисене уйрăм хватер йышăнма чарать.

Фашиссен „уполномоченнăйĕсем" хватерсем тăрăх çӳресе, хватерсенче пурăнакан çынсене: „епĕр йеврейсемпе пĕр хватерте пурăнмастпăр", тесе алă пустараççĕ. Алă пусма килĕшменнисене хăйсемшĕн „аван мар йапаласем" килсе тухма пултарасси çинчен астутараççĕ.

Йулашки вăхăтра паллă пулса тăнă тăрăх, йеврейсем хушшинчи погромсем ăраснах—Австрипе Судет облаçĕнче вăйлăн пулса иртнĕ. Судет облаçĕнчи хăшпĕр хуласенче погром хыççăн пĕр йеврей та йулман.

Швейцарири хаçатсем йеврейсем хушшинчи погромсем Германире ытла та тискеррĕн пулса иртни çинчен çыраççĕ. Йеврей халăхĕ хушшинче хăйсене хăйсем вĕлерекенсен хисепĕ хăрушла ӳсет. Хăйсене хăйсем пĕтĕм çемйипе вĕлерсе пĕтернисем те сахал пулман. Йеврейсем хушшинче арĕссем пĕрмайах ӳссе пыраççĕ. Берлин хули урамĕсем тăрăх кашни каç полици автомобилĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр çӳреççĕ. Çавăн пек, нойабĕрĕн 12-мĕшпе 13-мĕшĕ хушшинче полици тĕрмине адвокат, судйа, суд членĕ пулнă çынсене нумай хупса лартнă. Вĕсем хушшинче 70 çултан иртнĕ стариксем те нумай. Тепĕр каçхине врачсене арĕслеме пуçланă. Лейпцигра йеврейсене арçынсене пурне те арĕслесе лартнă. Вокзалсенче пур çĕрте те полицейски постсем тăратса пĕтернĕ. Вĕсем сăнран йеврей пек туйăнакан çынсене пурне те арĕслеççĕ.

Прагăран пĕлтернĕ тăрăх, Германи фашисăмĕ Чехословакирен йарса илнĕ Мост хулинче нойабĕрĕн 14-мĕшĕнче йеврейсене погром тунă хыççăн, йеврей çыннисене пурне те чикĕ урлă каçарса Чехословаки территорине йанă. Чехословакин чикĕре тăракан влаçĕсем беженцăсене хăйсем патне йышăнасшăн мар. Темиçе вуншар çемйе чикĕ хушшинчи çырмара 5 талăк ĕнтĕ хĕн курса пурăнаççĕ. Вĕсем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем нумай. Вĕсене çимĕç леçсе пама чарнă. Çак мĕскĕнсем хушшинче погром вахатĕнче аманнисем те нумай. Мост хулинчи пуљница аманнисене сыватма йышăнмать.

(ТАСС).

Аландски утравсем çинче укрепленисем тăваççĕ

Финљанди президенчĕ Каллио Аландски утравсем çинчи халăх хушшинче çар повиннăçĕ тăвасси çинчен распорйажени кăларнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Швеципе Финљанди правителствисен представителĕсен канашлăвĕнче Аландски утравсен кăнтăр йенчи линине çирĕплетесси çинчен решени йышăннă. Унта укрепленисем тăваççĕ, сыранри артиллери тата çӳлеле перекен тупăсем те пулаççĕ.

Аландски утравсене çирĕплетни кама тата мĕн тума кирлĕ пулнă-ха? Ботнически заливри (Фински заливран Балти тинĕсне тухнă çĕрте) стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк выран йышăнса тăракан çак утравсем—1909 çул хыççăн Российă аллинче пулнă. 1856 çулта Аландски утравсене нейтрализациленĕ, империалисăмлă вăрçă хыççăн, Лига наци решенийĕ тăрăх, вăл утравсене Финљанди çумне çирĕплетсе хунă. Англи, Германи, Дани, Итали, Латви, Полљшă, Финљанди, Франци, Швеци тата Естони 1921 çулти октябĕрĕн 20-мĕшĕнче договăр туса, Аландски утравсен нейтралитетне çирĕплетнĕ. Финљандийе унта çар укрепленисем тума, çар повиннăçĕ тума чарса хунă.

Швеципе Финљанди çак договăра фашисла Германи хушнипе пăснă.

Ĕç акă мĕнре. Швеци Германийе тимĕр тăпри нумай сутать. Çак тимĕр тăприн нумайĕш пайне Балти тинĕсĕ тăрăх Фински заливри портсем урлă турттараççĕ. Швеци тимĕр тăпри Германи фашисăмĕшĕн пысăк выран йышăнса тăрать. Вăрçа хатĕрленсе, фашисла Германи Швеци тимĕр тăпри пырса тăракан çулшăн хăрушлăх ан пултăр тесе тăрăшать. Аландски утравсем çинче çав тĕллевпе ĕнтĕ укрепленисем тăваççĕ.

* *

РОКК работникĕсен курсĕ

Çак кунсенче Шупашкарта тата Канашра РОКК Чăваш Обкомĕ организациленĕ РОКК пуçламĕш организацисен председателĕсен пĕр уйăхлăх курсĕсем хăйсен ĕçĕсене туса пĕтереççĕ. Курссенче 30 çын вĕренеççĕ. Курсантсене валљи лекцисем медицинăн тĕрлĕ отраçлисенчи специалиссем вулаççĕ.

ПĔЛТЕРНИ

1938 çулти нойабĕрĕн 22-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, кинотеатр çуртĕнче ПСК(б)П Шупашкар хула организацинчи партактивĕн пухăвĕ пулать.

КУН ЙĔРКИ:

1. ПСК(б)П Тĕпкомĕ „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" йышăннă постановленийĕ—докладчик Волков йулташ.

Пухăва пропускпа кĕртеççĕ, пропускне партком çекретарĕсемпе парторгсен ПСК(б)П хула комитетĕнче илмеле.

ПСК(б)П хула комитечĕ.

Краснофлотĕцсем пулăççсене вилĕмрен хăтарнă

ВЛАДИВОСТОК, нойабĕрĕн 19-мĕш. Самбовой бухтин тата Микойан йачĕпе тăракан колхозăн пулă тытакан виçĕ судни (моторлă суднасем) вăйлă шторма лекнĕ. Вĕсем вĕресе тăракан тинĕс тăрăх виçĕ кун хушши йăранса çӳренĕ. Апат-çимĕçсĕр тата шывсăр пулăççсем вăйран кайнă. Машинăсем ĕçлеме чарăннă, руљсем стройран тухнă. Анчах паттăр пулăççсем урса кайнă тинĕс вăйне хирĕç çине тăрса кĕрешнĕ. Хăйсене тăван çĕршыв хăтарасса вĕсем пĕлнĕ.

Н-ски çар карапне инкеке лекнĕ суднăсене шыраса тупма, вĕсене пулăшма приказ панă. Калама çук пысăк хумсем карапа 50 градуса çити тайăлтарнă. Çавăн пек çанталăкра тинĕс çинче пулăççсен суднисене тупма йăвăр пулнă. Çапах та, вахтăра тăраканĕ инçетре хура пăнчăсем курнă. Карап çав пăнчăсем патнелле çул тытнă. Суднăсем пĕр-пĕринчен виçĕ-тăват милре сапаланса ишсе çӳренĕ. Вĕсене буксира илес тесе карап çичĕ сехет хушши кĕрешнĕ, анчах шторм буксир канатĕсене татăла пăрахнă, суднасем çинчи канатсене хуçа-хуçа пăрахнă.

Каç пулнă. Шторм вăйлăланнă. Хумсем пулăççсене çăтса йарассипе хăратнă. Карап командованийĕ пулăççсене карап çине куçарма шут тытнă. Ку ĕçе тума хăтланакансемшĕн те, хăтармали çынсемшĕн те хăрушă пулнă. Краснофлотĕцсем çутçанталăк вăйне хирĕç темиçе сехет хушши паттăррăн кĕрешнĕ. Йулашкинчен суднăсем çинче пулнă 21 çынна пурне те хăтарнă.

(ТАСС).

Томскри государствă медицинă институчĕн профессăрĕсене наградăлани

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Томскри государствă медицинă институчĕ 50 çул тултарнă май, наукăпа педагогикă ĕçĕнче, организацилĕ ĕçре тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунăшăн институтри 4 профессăра Совет Сойузĕн орденĕсемпе наградăланă.

* * *

ССРС Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Томскри партипе совет организацийĕсем, обществăлă организацисем ыйтнине пурнăçа кĕртнĕ—Томскри государствă медицинă институтне В. М. Молотов йулташ йатне панă.

(ТАСС).

Колхозсенчи учонăйсем

Пахолков тата Кухмистров йулташсем—Горький йачĕпе тата Ворошилов йачĕпе тăракан йалхуçалăх ертелĕсенчи хатă-лабораторисен пуçлăхĕсем—Дон таврашĕнчи казак-колхозниксем хушшинче пысăк авторитетлă çынсем. Вĕсем йертсе пыракан хатă-лабораторисем—Новочеркасск районĕнче чи лайăххисем.

Çанталăк шăрăх тăнă пулсан та, Пахолков йулташ тулă калчисене минерал çăнăхĕсемпе (фосфăр, азот, калий) апат парса, гектар пуçне 40-шер центнĕр кĕрхи тулă туса илнĕ. Çĕрулмине шăтарса лартнă. Çакна пула гектартан 86-шар центнĕр пысăк пахалăхлă çĕрулми туса илнĕ.

Çĕнĕ куљтурăсем акса тăвас тĕлĕшпе колхозри опытник Кухмистров йулташ пысăк ĕç тунă. Вăл йертсе пынипе Ворошилов йачĕпе тăракан колхоз хирĕсенче ир çитĕнекен пахча-çимĕçсене çу каçиччен икĕ хут туса илнĕ. Гектартан 46-шар тоннă кăшман, 30-шар тоннă купăста туса илнĕ.

Пахолковпа Кухмистров йулташсем—колхозри чăн-чăн учонăйсем. Вĕсем иккĕшĕ те ăслăлăх учрежденийĕсемпе пĕрмайах çыхăну тытса тăраççĕ.

Ростов облаçĕнчи сăнавлă йалхуçалăх станци Пахолков йулташа стацин ăслăлăх совечĕн членне çирĕплетнĕ. Кухмистров йулташа гидротехникăпа мелиораци Кăнтăрти ăслăлăхпа-тĕпчев институчĕн учонăй Совечĕн членне суйланă.

(ТАСС).

Колхозсем çуракине хатĕрленеççĕ

Рйазаљ облаçĕнчи районсенче Сталинла Конституци кунне хатĕрленес ĕç сарăлса пырать.

Ратновск районĕнчи Хрущов йачĕпе тăракан тата „Çĕнĕ çул" колхозсем йалхуçалăх ĕçĕсене йăлтах туса пĕтернĕ, государствăна тырă, çĕрулми тата аш-какай памалли обйазателствăсене тултарнă. Халљхи вăхăтра вĕсем çуракине ăнăçлăн хатĕрленеççĕ. Йалхуçалăх инвентарĕсене йусаса пĕтернĕ.

Нумай йалсенче колхозниксем Сталинла Конституци кунĕ тĕлне çуракине хатĕрленсе çитнипе паллă тăваççĕ. Спасск районĕнчи „Хĕрлĕ майак" колхоз облаçра пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене çуракине кăтартулăн хатĕрленессишĕн социалисăмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланă.

(ТАСС).

Мĕнпур рабочисем нормăсене тултараççĕ

Мускаври Войтович йачĕпе тăракан вакунсĕм йусакан савăтра Сталинла Конституци кунĕ çывхарса килнĕ майпа социалисăмлă ăмăрту анлăн саралнă. Октябĕр уйăхĕнче савăт хăйĕн планне 125 процент тултарнă. Нойабĕр уйăхĕнче те вăл лайăх ĕçлет.

Савăтра ĕçлекен рабочисенчен çурри ытла стахановĕцсем. 500 рабочи ытла кашни кунах иккĕ норма ытла тултараççĕ.

Цехсенче нормăсене тултарман пĕр рабочи те çук.

(ТАСС).

Колхозсенчи гранатометчиксен кружокĕсем

Кагаљницк районĕнчи (Ростов облаçĕ) „Трудовой казак" йалхуçалăх ертелĕнчи колхозниксем Кубаљри казаксем патне пиншер гранатометчиксем хатĕрлеме чĕнсе çыру йанă. Кубаљри станицăсенче вăл чĕнĕве пысăк хавaспа йышăннă.

Уст-Лабинск районĕнчи „Свободный труд" йалхуçалăх ертелĕнче (Краснодар крайĕ) колхозниксем пурте пекех гранатометчиксем. Нумай пулмасть Осоавиахим организаци Уст-Лабинск станицинче гранатăлă „çапăçу" туса иртернĕ. Унта районри чи лайăх гранатометчиксем 100 çын хутшăннă.

Крайри колхозлă станицăсенчен нумайĕшĕнче гранатометчиксен кружокĕсене организациленĕ.

(ТАСС).

Ответлă редактăр И. М. ÇЕМЕНОВ.

1938 çулти нойабĕрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа декабĕрĕн 20-мĕш хушшинчи вăхăтра ЧАССР перекет кассисен тата государствă кредичĕн управленийĕ Шупашкарти 60-мĕш номĕрлĕ тĕп перекет кассине ревизи тăвать. Перекет касси çинчен мĕнле те пулин жалăба памали пулсан, пур граждăнсене те çырса йе сăмах вĕççĕн жалăба пама ыйтаççĕ.

Адрĕс: Шупашкар хули, 60-мĕш номĕрлĕ тĕп перекет касси, контролљор-ревизор Александрова.

Çĕнĕ савăт строителствин управленине

ЙАЛАНЛĂХАХ ТРАНСПĂРТ ĔÇНЕ ТУМА КИРЛĔ:

1. Организацисемпе предприйатисен тата колхозсен автомашинăсем.

2. Колхозсемпе йединоличниксен лашисем.

Шофĕрсене тата лавăç рабочисене общежити параççĕ, автомашинăсене тăратма гараж пур.

Ĕçленĕ вăхăтра строителствă горючи тата ыт материалсем хăйĕн фондĕнчен парать. Ĕçленĕшĕн ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çирĕплетнĕ хаксем тăрăх тӳлеççĕ.

ЫЙТМАЛА: Чернышевски урамĕ, 5.

Кадрсен пайĕ.

3—1

ТЕАТР

„ОГНИ МАЯКА"

А. Караçов çырнă „Огни Маяка" йатлă пйесăна лартса чăвашсен государствă академи театрĕ тепĕр пысăк çитĕнӳ турĕ. Пйесăри ĕç халљхи вăхăтра, Лăпкă океанра, Грознăй йатлă пĕчĕк утрав çинче пулса иртет. Унăн содержанийĕ акă çапла. Виçĕ каччă: метеоролог Сачков, рабочи Колпин тата моторист Нефедов утраври пĕртен-пĕр хĕре—Лизă радисткăна йурataççĕ. Анчах вĕсем виççĕшĕ те йурату çине ăрасна пăхаççĕ. Ак, моторист Нефедова илер, вăл вăтанчăклă, хăйĕн йуратуне Лизăна хăвăртах уçса кăтартма пултараймасть, Лизăпа калаçас пулсан та, пĕрремĕш хут хĕре йуратса пăхнă çамрăк пек, сăмах тупаймасть. Кунта вăл пит те ырă çын пек пулса, чăн-чăн йуратушăнах çунать пек туйăнат. Çавăнпа та вăл хăйĕн йуратуне пурнăçлас шутпа майака пăхакан тата майак начаљникĕ урлă тума тытăнать. Чăнах та, вăл йулашкинчен хăй шухăшне пурнăçлас патнех çитерет. Çав вăхăтрах Лизăн йуратăвĕшĕн, савăнăçлă ĕçшĕн, пурнăçшăн çунакан рабочи Колпин тата тарăн шухăшлă метеоролог Сачков та çунса çӳреççĕ.

Çавăн пек савăнăçлă, ĕçшĕн çунса пурăнакан йышра, майак патĕнче çирĕм çул хушши ĕçленĕ ватăсем хушшинче—Йакутинпа Аннă Антоновнă хушшинче лăпкă пурнăç хăвăрт пăсăлса кайать: Аннă Антоновнă—майака пăхакан башљă çинчи çерçи йăви хыçĕнче Лăпкă океанри флотăн маневрне ӳкерсе илнĕ фотокартăчкăсем тупать. Ватăсем пысăк хуйха ӳкеççĕ. Вĕсем хушшинче шпион пур. Анчах кам? Ăна пĕлмеççĕ. Вĕсем малтанласа Лизă радисткă çине те, Сачков метеоролог çине те шутласа пăхаççĕ. Сăнаса, шыраса пăхсан—йулашкинчен тупаççĕ: вăл моторист Нефедов. Ак метеоролог Сачковпа моторист Нефедов утравран Хабаровскăна тухса кайаççĕ. Сывпуллашаççĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ рабочи Колпин алă панă чухне хăвăрт Нефедовăн аллисене хыçалала çавăрса тытать, тытать те çыхса хурать. Лизăпа Аннă Антоновнă погранзаставăна пĕлтерме башљă çине хăпараççĕ. Йакутинпа Колпин утрава пăхма тухса кайаççĕ. Шпион Нефедова Сачков сыхласа йулать. Çав вăхăтра ĕнтĕ утрава çарçыннисем тăваттăн килсе кĕреççĕ. Асли Сачкова Йакутина чĕнме каларса йарать. Мĕн куратпăр! Нефедовăн, шпионăн аллине салтаççĕ, ун аллине брауниг тыттараççĕ. Иккĕшне айалта хăварса, тепĕр иккĕшĕ Нефедовпа пĕрле башљă çине хăпарса кайаççĕ.

Йакутин винтовкине аллинче тытса кĕрет. Пароль ыйтать. Вăл тăшмансем иккенне часах туйса илет: вĕсем çине персе йарать, пĕрне вĕлерет, тепĕрне амантать. Çавăн чухне Сачкова та тăшмансем хытах амантаççĕ. Йакутинпа рабочи Колпин оборонăна вырнаççĕ. Башљăри диверсантсене çирĕп сыхлаççĕ.

Башљă çинче Лизă радисткăпа Аннă Антоновнă. Лизă çĕмĕрсе тăкнă радиона йусать. Пограничниксене—заставăна шпион тытни çинчен пĕлтерет. Çав вăхăтра диверсантсем хăпараççĕ. Вĕсенчен фотоаппарат пама ыйтаççĕ. Анчах совет хĕрарăмĕсем тăшмансене часах туйса илеççĕ. Вĕсем диверсантсенчен хăрамасăр вĕсене хирĕç хастар тăраççĕ.

Йулашкинчен башљăран тухакан диверсантсене пере-пере ӳкереççĕ, теприне çыхса та лартаççĕ. Ун хыççăн башљăран Лизă радисткă тухать. Вăл шап-шурă, пысăк хуйхăлă—нăл Аннă Антоновнăна вĕлерни çинчен тата хăй Нефедова башљă тăрринчен, пусма карчĕ çинчен тĕртсе ӳкерни çинчен пĕлтерет. Нумай та вăхăт иртмест, чикĕри катĕр килнĕ сасă илтĕнет.

Çапла пĕр пĕчĕк утраври паттăр патриотсем тăван çĕршывăн тăшманĕсемпе кĕрешсе çĕнтереççĕ.

Пйесăна пăхса ларатăн та, пĕрре те театрта мар пек, таçта айакра, Лăпкă океанра, Грознăй йатлă пĕчĕк утраврипе пĕрех пулса, тăван çĕршывăн патриочĕсемпе çума-çумăн тăрса тăшмансем çине пысăк курайманлăхпа пăхса ларатăн. Кашни артист пуçра йулмалăх уйрăм образсем туса кăлараççĕ.

Акă майак начаљникĕ Йакутин (артист Медиков), майака пăхакан Аннă Антоновнă (артисткă Долгова) ватăсем пĕчĕк утравра çирĕм çул пурăнаççĕ, çамрăксемпе пĕрле ĕçлеççĕ, савăнаççĕ, утрав ĕçĕшĕн чун çывăхĕнчи йапалашăн пек çунаççĕ. Лизă радисткă (артисткă Гурйĕва) пуринпе те савăнăçлăскер, çамрăк каччăна йуратса хăйĕн чунне нумай çунтарать, йулашкинчен килĕштернĕ çынна хирĕç тăрса ăна çĕнтерет. Лизăн образĕ йулашки картинăсенче пит те хумхантарулă, паттăрăн пулса тухать. Чернорабочий Колпин (артист Алексеев) савăнăçлă, вĕри, çав вăхăтрах тăшмансене пит те пысăк çилĕпе курайманăсть; моторист Нефедов (артист Ургалкин) лăпкă етем, тилĕ пекех чейе тăшман, анчах хăйĕн çыннисем килсен урса кайать. Ку образа Ургалкин артист ăнăçулăн туса çитернĕ. Çавнашкалах тăшмансен образне (артистсем Виноградов тата Çеменов) лайăххах кăтартса параççĕ.

Лайăх йенĕсемсĕр пуçне, пйесăра кăлтăксем те пур. Йакутин (артист Медиков) тата Колпин (артист Алексеев) пур çĕрте те лайăх выљăнă çĕртех, диверсантсемпе башљăран калаçнă хыççăн башљă умĕнче пăшалĕсене пăрахсах пĕр шиксĕр чĕлĕм мăкăрлантарса лараççĕ. Кунта вара, тăшмансене айвансем вырăнне шутланăнах туйăнать.

„Огни Маяка" пйесă халљхи вăхăтран илсе çырнă йапала. Вăл куракана пит те хытă хумхантарать, савăнтарать, тăшмансем çине пысăк курайманлăх çĕклет, патриотисăма вăйлатать.

Ал. Медведев.

Уполномоченный Чувашглавлита № 568 Гор. Чебоксары, типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 832, ф. 6. 58×84 п. л.